Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать

**Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!**

1937 ДЕКАБĔР 11 ШАМАТКУН 283 (4795)-мĕш №

# ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

## СОЙУЗ СОВЕТНЕ ДЕПУТАТА СУЙЛАМА ТĂРАТНĂ КАНДИДАТСЕМ

Андрейева Зойа Ананйевна—Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ. Сойуз Советне депутата суйлама Шупашкарти №-364 суйлав округĕнче регистрациленĕ. Чăваш.

* * *

Цыганова Йевдокийа Петровна—Куславкка комбинатĕнчи стахановкă. Сойуз Советне депутата суйлама Канашри №-365 суйлав округĕнче регистрациленĕ. Чăваш.

* * *

Спасов Лука Семенович—Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ. Чăваш. Сойуз Советне депутата суйлама Улатăрти № 366 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Краснов Андрей Михайлович—орденоносец, Иетерне районĕнчи „Крестьянская газета“ колхоз председателĕ. Чăваш. Сойуз Советне депутата суйлама Çĕмĕрлери №-367 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

***Пурте çак кандидатсемшĕн сасăлăр.***

## Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Тĕп Комитечĕ, Оборонăна тата Авиаципе Хими строителствине пулăшакан обшчествăн (Осоавиахим) Тĕп Совечĕ тата Физкуљтурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри Комитечĕ

# ЧĔНСЕ КАЛАНИ

***Мĕн пур çамрăк суйлавçăсене, комсомолкăсемпе комсомолецсене, Осоавиахимпа физкуљтура организацисен мĕн пур членĕсене***

### ЙУЛТАШСЕМ!

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче Совет çĕршывĕнчи çамрăк гражданисем хамăр тăван çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисемпе пĕрле ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйлаççĕ.

Çак куна мĕлйуншар çамрăк çынсем хăйсен мухтавлă гражданин тивĕçне пурнăçа кĕртме суйлав урнисем патне пыраççĕ.

Камшăн памала хăвăн сасна, кама шанса памала хăвăн интерессене пурнăçа кĕртессине—кашни çамрăк суйлавçă умнех çакнашкал ыйтусем тухса тăраççĕ.

Ĕççыннисен малти отрйачĕ — Пĕтĕм Сойузри Коммунисен (бољшевиксен) Партийĕ—суйлава партире тăманнисемпе, профессилĕ сойузсемпе, комсомолпа, Осоавиахим, физкуљтурă, ĕççыннисен тата ытти организацийĕсемпе тата обшчествисемпе сойуз туса тухать. Çапла ĕнтĕ, Аслă Совета суйлама тăратакан кандидатсем—коммунисем те, партире тăманнисем те—пирĕншĕн пурнишĕн те пĕр пулаççĕ.

Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Тĕп Комитечĕ, Осоавиахим Тĕп Совечĕ тата Физкуљтурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри Комитечĕ мĕн пур çамрăк суйлавçăсене, мĕн пур комсомолкăсемпе комсомолецсене, Осоавиахим членĕсене, физкуљтурниксемпе физкуљтурницăсене çак кандидатсемшĕн—коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăлама чĕнеççĕ.

Мĕншĕн çамрăксен хăйсен сассине коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр хавассăн памала? Мĕншĕн çак кандидатсене çамрăк суйлавçăсем цĕтĕмпех шанса тăма пултараççĕ?

Хăйсен сасĕсене коммунисем партире тăманнисемпе пĕрле тăратнă кандидатсемшĕн парса, çамрăк суйлавçăсем бољшевиксен партийĕшĕн, унăн политикишĕн сасăлаççĕ, вăл парти ĕççыннисене капитал пусмăрĕнчен хăтарчĕ, пĕтĕм совет халăхне пуйан, куљтурлă, телейлĕ пурнăç туса пачĕ, тăвать те.

Рабочисемпе хресченсем çирĕм çул кайарах бољшевиксен партийĕ йертсе пынипе тунă Совет влаçĕ пире мĕн пĕчĕкренех ăшшăн пăхса ÿстерчĕ. Вăл граждăн вăрçи çулĕсенче пирĕн ача чухнехи пурнăçа сыхласа тăчĕ, çĕршыв йухăнса ситнĕ çулсенче çăкăр ситмен чухне вăл пире çăкăр пачĕ, таварсем çитмен чухне—тăхăнтарчĕ, тумлантарчĕ, епĕр çамрăк чухне—пирĕн ĕçлеве сыхларĕ, хăй укçипе пире вĕрентрĕ. Совет влаçĕ халĕ, хамăр çĕршыва йăлă та хăватлă туса çитерсен, вăл çамрăк ăру ваљљи йаланлăхах ĕç, кану, вĕренÿ пачĕ.

Пирĕн социалисăмла тăван çĕршыври çамрăксем йаланлăхах експлоатацирен хăтăлнă.

Елĕк патша Российĕ чухне пĕтĕм рабочисенчен виçĕ пайран пĕр пайĕ вуникке йарса пуснă çĕрех фабрикăсемпе заводсенче ĕçлеме пуçланă; тепĕр пайĕ—12—14 султан ĕçлеме пуçланă; йулашки виççĕмĕш пайĕ çеç пĕртак çулланса çитсен ĕçлеме пуçланă.

Пирĕн совет çамрăкĕсем фабрикант, помешчик, кулак патĕнчи хăлран кăларакаç ĕçе пĕлмеççĕ. Совет влаçĕ çамрăксен ĕçне тăрăшса сыхлать. Çамрăксем ваљљи кĕске ĕç кунĕ тунă. Çамрăк çынсем хăйсен ĕçĕшĕн ĕç укçи çитĕннисемпе тан илеççĕ. Пирĕн çамрăксем ĕçсĕрлĕх хăрушлăхĕнчен йаланлăхах хăтăлнă. „Çук пурнăç“, „ĕçсĕрлĕх“, „хура кун“—çаксем вĕсем пирĕн ăнлаврап йаланлăхах тухса ÿкнĕ сăмахсем.

Социалисăм стройĕ çĕнтернипе пула совет çĕршывĕнчи çамрăксемпе хĕрачасем хулара та, йалта та ĕçлĕ пулчĕç. Çамрăксем кирек мĕнле квалификацилĕ ĕç те, кирек мĕнле специаљнăç та илме пултараççĕ.

Патша стройĕ чухне тĕттĕм, мĕскĕн пулнă йал çамрăксем, халĕ куљтурлă та пуйан пурнăçпа пурăнаççĕ. Колхоз стройĕ ăна ирĕклĕ те савăнăçлă ĕçлеме пысăк майсем туса пачĕ.

Çамрăк çын тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн гÿрĕ кăмăлпа ĕçлет пулсан, пирĕн социалисăмла обшчествă ăна хисеплет, пĕтĕм халăх умĕнче чапа, мухтава кăларать.

Кам туса пачĕ çамрăксене çак телейлĕ те савăнăçлă пурнăçа? Ăна çамрăксене Ленин—Сталин партийĕ туса пачĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ çамрăк суйлавçăсем хăйсен сасĕсене савăнсах коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн параççĕ.

ССР Сойузĕ пек ĕççынни çамрăкĕсене пĕлÿ тата куљтурă патне ытма анлă çул уçса панă çĕршыв тĕнчере урăх пур-и?

Патша Российĕнче рабочисемпе хресчен çамрăкĕсен тĕттĕмлĕхре, вĕренмесĕр пурăнма тивнĕ. Çамрăксен чи пысăк пайĕ хутла вĕренмесĕр йулнă. Сахалăшĕ анчах пуçламĕш йе чиркÿпе приход шкулсенчен вĕренсе тухма пултарнă, ĕççамрăкĕсене вăтам тата аслă шкулсенче вĕренме май пулман. Ĕççамрăкĕсем вĕренес ĕç пур капиталисăмла çĕршывсенче те халĕ те çаван пекех.

Совет влаçĕ çеç пурне те обйазателнăй йĕркепе вĕрентес ĕçе пурнăçа кĕртрĕ. ССР Сойузĕнчи шкулсенче 30 мĕлйун ача вĕренет. Мĕлйун çурă çамрăк арçын ачасемпе хĕрсем аслă шкулсемпе техникумсенче вĕренеççĕ. Совет çĕршывĕнчи çамрăксем умĕнче пур шкулсен, институтсен, университетсен алăкĕсем уçă. Пирĕн çĕршывра—куљтурлă тата вĕреннĕ çын пулма пĕлÿ илесшĕн кăмăл пулни, çине тăни, тăрăшни çеç кирлĕ.

Çамрăксене пĕлÿ туйанма, куљтурăн пĕтĕм пуйанлăхне алла илме ниçта курман майа кам туса пачĕ? Ăна çамрăксене Ленин—Сталин партийĕ пачĕ.

Акă мĕншĕн çамрăк суйлавçăсем хăйсен сасĕсене бољшевиксен партийĕшĕн, коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн параççĕ.

Совет влаçĕ, хăйĕн ачине йуратакан, ушшăн тăрăшакан амăшĕ пекех, çамрăксен сывлăхне сыхлать, унăн куљтурлă канăвĕшĕн тăрăшать. Кашни çулах государствă ĕççыннисене ĕç укçи тÿлесех отпуск парать. Çамрăксем ваљљи санаторисем, канмали çуртсем уçнă. Çамрăксемшĕнех парксемпе клубсем, библиотекăсемпе читаљнăсем, театăрсемпе киносем. Мĕлйуншар арçыначасемпе хĕрсем физкуљтурăпа тĕрлĕ спорт вăййисене хутшăнă. Çамрăксем ваљљи совет влаçĕ стадионсем, шыв станцисем, турисăм базисем, аероклубсем тунă.

Кам пачĕ çамрăксене хăйсен ÿт-пÿ тата ăс-хакăл вăйĕсене пур йенĕпе те вăйлатса пымалăх çак майсене? Çакна Ленин—Сталин партийĕ пачĕ, ăна Совет влаçĕ пачĕ.

Акă мĕншĕн çамрăк суйлавçăсем хăйсен сасĕсене çамрăксем ваљљи капăç правиç, куљтурлă пурнăç прави кĕрешсе илнĕ бољшевиксен партийĕшĕн, коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн параççĕ.

Совет çамрăкĕсем ĕççыннине, вăл мĕнле нацире тăнине пăхмасăр, хисеплеме вĕренсе ÿсеççĕ. Мĕн çамрăкранах пирĕн çамрăксем—вырăссемпе узбексем те, украинцăсемпе казахсем те, белоруссемпе таджиксем те, грузинсемпе туркменсем те, армйансемпе тутарсем те, нимĕçсемпе киргизсем те, пушкăртсемпе карелсем те, чечен-ингушсемпе осетинсем те, кабардино-балкарсемпе дагестанцăсем те, калмыксемпе мордвасем те, монголсемпе марисем те—хăйсен ăсчăнне етемлĕхĕн чи малта пыракан идейине, интернационалисăмпа халăх туслăхĕн идейине пуйанлатаççĕ. Çак аслă идейăсемпе совет çамрăкĕсене коммунисла парти хĕçпăшаллантарать.

Акă мĕншĕн совет çамрăкĕсем Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр йурататççĕ, акă мĕншĕн çамрăк суйлавçăсем хăйсен сасĕсене коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, бољшевиксен партийĕшĕн параççĕ.

Совет çамрăкĕсемпе хĕрĕсем хăйсен тăван çĕршывĕн чăн-чăн хуçисем пулса воспитани илсе çитĕнеççĕ. Совет Сойузĕнчи çамрăксен ниçта курман политикăлă правасем пур. Вĕсем вунсакăр çула çитсен государствă влаçĕн мĕн пур органĕсене суйлас тата суйланас правапа усă кураççĕ. Капиталисăм çĕршывĕсенче çамрăксен çавăн пек правасем çук, пулма та пултараймасть.

Нумай капиталисăмлă çĕршывсенче хĕрарăмсене саса прависĕр хăварнă. Пур капиталисăмлă çĕршывсенче те салтаксемпе матроссене, капиталисен саккунĕ тăрăх, государствă ĕçĕсене хутшăнтармаççĕ. Совет стройĕ анчах, Ленин—Сталин партийĕ анчах хамăр çĕршыври çамрăк çынсене,—арçын-хĕрарăмне пăхмасăр, мĕнле националнăçпа расă пулнине тата обшчествăри вырăнне пăхмасăр,—государствă влаçĕн мĕн пур органĕсене суйлама тата суйланма права пачĕç.

Совет халăхĕ хăйĕн çамрăкĕсене çав тери шанса йуратса пăхать. ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсем хушшинче хамăр тăван çĕршывăн çамрăк ывăлĕсемпе хĕрĕсем—рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем, ăслăлăх, куљтурă тата искусствă работникĕсем сахал мар.

Кам пачĕ совет çамрăкĕсене çак аслăран та аслă политикăлă правасене? Çамрăксене вăл правасене Ленин—Сталин партийĕ пачĕ, вĕсене Совет влаçĕ пачĕ.

Акă мĕншĕн çамрăк суйлавçăсем хăйсен сасĕсене хавхаланса коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, бољшевиксен партийĕшĕн, Совет влаçĕшĕн параççĕ.

Совет çамрăкĕсен пур прависене те, вĕсен пурнăçĕн телейĕпе хаваслăхне ССР Сойузĕнчи халăхсем коммунисла парти йертсе пынипе йăвăр та хăйар кĕрешÿре çĕнсе илнĕ.

Çав правасене çĕршыври тата тулашри тăшмансем тапăнасран пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа пирĕн пархатарлă каратељнăй органсем çивĕч сыхласа тăраççĕ. Вĕсем пирĕн заводсемпе фабрикăсене, пирĕн колхозсен пуйан уйхирĕсене сыхласа тăраççĕ, вĕсем пирĕн савăнăçлă пурнăçа, пирĕн мирлĕ çĕр çинчи мирлĕ ĕçе сыхласа тăраççĕ.

Совет çамрăкĕсем никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар ретĕнче службăра пулас чыса хакла хураççĕ, совет çĕрне тăшманла тасамарлăхсенчен, сăтăрçăсемпе шпионсенчен тасатас хисеплĕ те хăйулă ĕçре каратељнăй органсене, совет разведкин органĕсене пулăшас чыса хакла хураççĕ.

Кам турĕ пролетари диктатурин çак çапăçулă органĕсене? Вĕсене организацилекенни — коммунисла парти пулчĕ, вĕсене Совет влаçĕ турĕ.

Акă мĕншĕн çамрăк суйлавçăсем хăйсен сасĕсене коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, вĕрçĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарнă никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çара тăвакан тата вичкĕн каратељнăй органсене тăвакан бољшевиксен партийĕшĕн параççĕ.

**ÇАМРĂК СУЙЛАВÇĂ ЙУЛТАШСЕМ!**

Пирĕн аслă анне — тăван çĕршыв умĕнче хамăрăн тивĕçе чыслăн пурнăçа кĕртер.

**1937 ÇУЛХИ ДЕКАБĔРĔН 12-МĔШĔНЧЕ ПУРТЕ ПĔР ÇЫН ПЕК СУЙЛАВ УРНИСЕМ ПАТНЕ ПЫРСА, ХАМĂРĂН САСĂСЕНЕ БОЉШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ ПАРТИРЕ ТĂМАННИСЕМПЕ СОЙУЗ ТУСА ТĂРАТНĂ КАНДИДАТСЕМШĔН ПĔР КАРРĂН ТА ПĔР ШУХĂШЛĂН ПАРАР!**

**СУЙЛАВ КУННЕ—1937 ÇУЛХИ ДЕКАБĔРĔН 12-ШНЕ—СОВЕТ ÇАМРĂКĔСЕНЕ ЛЕНИНĂН—СТАЛИНĂН БОЉШЕВИКЛА ЙАЛАВĔ ТАВРА ПĔТĔÇТЕРМЕЛИ АСЛĂ ПРАÇНИК ТУСА ХУРАР!**

**СЫВĂ ПУЛТĂР ПИРЕ ПĂХСА ÿСТЕРНĔ КОММУНИСĂМĂН АСЛĂ ПАРТИЙĔ—БОЉШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ!**

**СЫВĂ ПУЛТĂР СОВЕТ ВЛАÇĔ!**

**СЫВĂ ПУЛТĂР ÇĔНТЕРНĔ СОЦИАЛИСĂМĂН СТАЛИНЛА КОНСТИТУЦИЙĔ!**

**СЫВĂ ПУЛЧЧĂР ПИРĔН РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН СОВЕТ ÇАМРĂКĔСЕМ!**

*Пĕтĕм Сойузри Çамрăксен Ленинла Коммунисла Сойузĕн Тĕп Комитечĕ.*

*ССР Сойузĕн Осоавиахим Тĕп Совечĕ.*

*Физкуљтурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри Комитечĕ.*

Бољшевиксен партийĕ пур коммунисемпе сочувствуйушчисене те, партире тăракан кандидатсемшĕн те, партире тăман кандидатсемшĕн те, пурте пĕр çын пекех кар тăрса сасăлама чĕнет.

Бољшевиксен партийĕ—партире тăман суйлавçăсем те коммунис-кандидатсемшĕн партире тăман кандидатсемшĕн сасăланă пекех пĕр харăс сасăлĕç тесе шутлать.

*Пĕтĕм Сойузри Коммунисен (бољшевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ чĕнсе каланинчен)*

## НАЦИОНАЉНĂÇСЕН СОВЕТНЕ ДЕПУТАТА СУЙЛАМА ТĂРАТНĂ КАНДИДАТСЕМ

Харитонова Ољга Тихоновна—Патăрйел районĕнчи Хурти Сĕнтĕрти вăтам шкулти учителницă. Чăваш. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Патăрйелти № 502 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Моисеева Тамара Алексейевна—Улатăрти паровоз юсакан заводри механически цехĕн бригадирĕ. Вырăс. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Улатăрти № 503 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Новиков Иван Василйевич—ПСК(б)П Çĕмĕрле райком секретарĕ. Вырăс. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Çĕмĕрлери № 505 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Розанов Алексей Михайлович—Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ. Вырăс. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Йĕтĕрнери № 506 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

***Пурте çак кандидатсемшĕн сасăлăр.***

*Националнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем*

Чкалов Валерий Павлович — Совет Сойуз Геройĕ. Вырăс. РСФС Республикĕнчен Националнăçсен Советне депутата суйлама Горькири № 15 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Пумпур Петр Иванович—Мускав Çар Округĕн Çар Сывлăш вăйĕсен начальникĕ. Националнăçсен Советне депутата суйлама Вăрнари № 504 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

## Чкалов, Пумпур, Краснов йулташсемшĕн сасăлама пулаççĕ

ВĂРНАР. Перремĕш хут суйлава хутшăнакан çамрăксем питех те нумай. Вĕсем кӳ тарана суйлавра пулман.

— Епĕ хамăн сассăма ĕççыннисен шанчăклă ывăлĕсемшĕн: Чкалов, Пумпур, Краснов йулташсемшĕн паратăп. Çак йулташсемшĕн сасăлама хамăр килйышсенчи суйлавçăсене, пускилти суйлавçăсене чĕнетĕп—тет çамрăк суйлавçă Кудрйавцев.

— Епĕ кăçал перремĕш хут суйлава хутшăнатăп. Ку маншăн калама çук пысăк чыс. Епĕ хам Чкалов, Пумпур, Краснов йулташсемшĕн сасăлатăп—тет Андрейева.

Ст. Улангай.

# Коммуниссемпе партире тăманнисен суйлав блокĕ çинчен

*В. М. Молотов йулташ кăçалхи декаберĕн 8-мĕшĕнче Молотовский суйлав округ пухувĕнче каланă сăмах*

## I. Пирĕн партире тăманнисемпе тунă блокăн тымарĕсем

Йулташсем, пирĕн парти, хăйĕн суйлавçăсене чĕнсе каланине пичетлесе кăларса, хăйĕн суйлав йалавне пĕтĕмĕшпех сарса йачĕ. Çав йалав социализмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне чĕнет, Аслă Совет суйлавĕнче коммунис-кандидатсемшĕн те, партире тăман кандидатсемшĕн те, большевикла парти партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе, служăшчисемпе тата интеллигенципе пĕрле палăртнăскерсемшĕн, тăма чĕнет. Çав йалав коммуниссемпе партире тăман рабочисен, партире тăман хресченсен, партире тăман служăшчисен, партире тăман интеллигенцин пĕркилĕшӳлĕ суйлав блокне тума, пĕтĕм çĕршывра коммуниссемпе партире тăманнисен блокне тума чĕнет. (Алă çупассĕ).

Советлă Социализмлă Республикăсен Сойузĕн Аслă органĕ суйлавне коммуниссем партире тăманнисемпе тунă блокăн никĕсĕ çинче, сойузĕн никĕсе çинче иртермеле—çавăн пек пирĕн задачă.

Çакă вăл йепле простă пек туйăнмала. Чăнахах та, йепле простой шухăш, простой чĕвӳ, простой та йар уçă йыхрав: коммуниссем, партире тăманнисемпе ĕççыннисемпе пĕрле ĕçлĕр, пĕрлехи таса ĕçе тума, хăвăрăн тăвăн, совет влаçĕн чи аслă органĕсене суйлама пĕркилĕшӳлĕ блок организацилĕр. Халĕ вăл пирĕншĕн пачах та простой тата уçăн паллă ĕç пек туйăнма пултарат: Совет влаçĕн чи аслă органĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блокне тумала Анчах вăл халь çеç, Октябр çирĕм çул тултарнă тĕле, епĕр ĕнтĕ Октябр революцийĕн виççĕмĕш вунăçуллăхне кĕрсен простă та йăлтах уççăн паллă пулса тăчĕ Пирĕн революцийчен кăна мар, революцин малтанхи çулĕсенче те çавнашкалли нимĕн те, коммунисла парти партире тăман пĕтĕм массăпа тунă çавăн пек блок йеверли нимĕн те пулма пултарайман.

Мĕн те пулин çавăн йеверлине, мĕнле те пулин парти пĕтĕм халăхпа тунă блок йеверлине мĕнле те пулин урăх, советлă мар çĕршывра шутласа илме пулат ши? Мĕншĕн-ха унта та, буржуалă çĕршывсенче, мĕнле те пулин партин çав простой та уççăн паллă çулпа каймас мар? Çавна шутласа кăларма йăвăр мар пек туйăнат, анчах ĕç тухмаст çав. Буржуалă государствăра çавăн пек задача пĕр парти те хăй çине илме пултараймаст. Унта, капиталисăм çĕршывĕсенче, пурпер клас кĕрешӳвĕ касса тăракансенче, ун çинчен ĕмĕтленме те май çук. Пĕр буржуалă партин те çавна тума вăй çитмест.

Совет Сойузĕнче кăна Октябр революци çирĕм çул çине кайсан, большевикла парти кăна çак аслă задачăна хăй умне лартма май илчĕ. Вăл простă та уççăн паллă задачă, анчах çавăн пек задачсене лартма правăпа май илмешкĕн пысăк тусене çаварса лартмала. Мĕншĕн тесен коммунисла партипе партире тăман халăх массисен суйлав блокне тăвасси, çав никĕс çинче ĕнтĕ влаçăн чи аслă органĕсен суйлавне пĕркилĕшӳлĕн иртересси—вăл аслă ĕç, вăл пĕтĕм тĕнчипе историлĕ вырăн йышăнса тăракан ĕç.

Çак задачă патне çитсе тăма, пирĕн Октябр революцийĕ çирĕм çул тултарассине кĕтсе илмеле пулнă. Пирĕн çĕршывра Октябр революцийĕн мĕн пур тăшманĕсене тĕппе çитти çĕмĕрсе тăкмасăр, çав çирĕм çул тултарассине кĕтсе илме май çук пулнă. (Нумайччен алă çупассĕ).

Çав Октябр ĕçĕшĕн пынă кĕрешӳре коммуниссемпе партире тăман рабочисен тата хресченсен сойузĕ йĕркелеленсе пынă та ĕнтĕ. Большевиксем Октябр революцийĕн пур тапхăрĕсенче те рабочисемпе хресченсен сойузнĕ тĕреклетессишĕн, хуларипе йалти партире тăман ĕççыннисен пĕтĕм массине партирен пĕтĕçтерессишĕн кĕрешнĕ. Октябрĕн мĕн пур тата пур тĕрлĕ тăшманĕсене хирĕç пынă кĕрешӳре коммуниссем партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе, интеллигенципе тунă çав сойуз, туптанса пынă. Халĕ ĕнтĕ пирĕн çав сойуза Аслă Совет суйлавне иртермели никĕс тума май пур.

Большевиксемпе партире тăманнисен çавăн пек сойузне тума май пурри çинчен каласма Совет Сойузĕнче социализм çĕнтерĕвне тумала пулнă. Епĕр çавна турăмăр Социализм ĕнтĕ пирĕн çĕршывăн пĕтĕм пурнăçне палăртса пырат.

Епĕр тăшмансене простă çĕмĕрсе тăкрăмăр кăна мар, епĕр çĕнĕ государства турăмăр, çĕнĕ общества йĕркелерĕмĕр, çĕнĕ совет халăхне туса хутăмăр. (Алă çупни вăйланса пырат).

Епĕр совет халăхне туса хутăмăр, унта експлоататăрсене валĕçи вырăн çук, унта пур граждансем те—ĕççыннисем, апла пулсан, унта пĕтĕм халăхăн пĕр пĕтĕмле интерес. Çавăнпа коммуниссем партире таман рабочисемпе тата хресченсемпе, партире тăман служăшчисемпе тата интеллигенципе тунă суйлав блокĕ çинчен каласма май пулса тăчĕ. Ку çĕнтерӳ раснах пысăк, мĕншĕн тесен партире тăманнисемпе тунă çавăн пек сойуз çинчен пĕтĕм Совет Сойузĕнче, уйрăмах кашни совет республикенче те каласма пултаратпăр.

Пирĕн çĕршывра Аслă Совета суйланă чухне коммуниссемпе партире тăманнисен суйлав блокне туса хатĕрлеме пирĕн Сталинла Конституци тумала пулнă. Çав Конституци, çĕнтернĕ социализмла конституцийĕн никĕсĕ çинче декаберĕн вуниккĕмĕшĕнче суйлавсем пулса иртеççĕ.

Çав Сталинла Конституцийĕ хамăран алла илме пире мĕн кирлĕ пулнă?

Çавна валĕçи пире, чи малтан, Советсен влаçне туса хуни тата ăна мĕн пур тĕрлĕ тапăнусенчен хӳтĕлесе хăварни кирлĕ пулнă. Епĕр çавна ăнăçуллăн турăмăр.

Унтан. Çавна валĕçи пире Ленин—Сталин партийĕ пек парти кирлĕ пулнă. (Нумайччен алă çупассĕ).

Çав Конституцийĕ çĕнсе илме, пире, йулташсем, пĕтĕм хамăрăн ĕç пуçĕнче йалан постра тăракан, йалан хăйĕн капитан мостикĕ çинче тăракан, алра тĕрĕс компас тытса пыракан, большевиксен висене пĕтĕçтерме пĕлекен, социализм çĕнтерĕвĕсемпе уйăрăлми çыхăнса тăракан çын кирлĕ пулнă. Пĕр сăмахпа каласан, пирĕн Сталинла Конституци пур, мĕншĕн тесен пирĕн партине тата Совет Сойузĕнчи мĕн пур ĕççыннисене социализмла Конституци туса паракан Сталин йулташ малала илсе пырат! (Тăвăллăн алă çупассĕ, "урра"! кăшкăрассĕ. Пурте ура çине тăрса: „Сыва пултăр Сталин йулташ!" тесе кăшкăрассĕ).

Çакан хыççăн, пирĕн ума Аслă Совет суйлавĕнчи тĕп задачă: пирĕн государствăн чи аслă органне депутатсем суйлассинче коммуниссем партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе тата интеллигенципе тунă пĕркилĕшӳлĕ сойуз пулмала тăвас задачă пĕтĕмĕшпе тухса тăни паллă ĕнтĕ. Çав задачă совет халăхĕн моральлĕ тата политикăла чăн-чăн пĕрлĕхне туса хурсан пирĕн умма пĕтĕм анлăшĕпе тухса тăчĕ. Çав хăйех халĕ пирĕн социализмлă обществăн никĕсĕ пулса тăрат, вăл аслă совет халăхĕн пурнăçĕнче социализма пур нăçа кĕртни пулат те. (Алă çупассĕ).

Мĕнле блок çинчен сăмах пырат? Пирĕн партире коммуниссем икĕ мĕлйун тата сочувствующисем çур мĕлйун. Аслă Совет суйлавĕнче суйлавçăсем 90 мĕлйун ытларах пуласçĕ. Коммуниссем, куратпăр ĕнтĕ, пĕтĕм суйлавçăсен массин пысăк мар пайĕ çеç пулса тăрассĕ, анчах вĕсен вăйĕ çакăнта пулат: вăл—халăх авангарчĕ. Пĕтĕм халăх интересĕсем йенчен пăхсан, коммуниссем партире тăманнисем пирĕн çĕршыва социализм малала çĕнтерессишĕн тунă пĕркилĕшӳлĕ суйлав союзĕ пăлхавçăн мĕн пулма пултăр, пирĕн условисенче çаваран пайăрăххи мĕн пулма пултарăт? Епĕр, Аслă Совет суйлавне икĕ мĕлйун коммунис çав 90 мĕлйун суйлавçăпа пĕрле, пĕркилĕшӳлĕн урă-урăн утса пыччăр, тесшĕн. (Алă çупассĕ.)

Ку—пĕчĕк задачă мар, йулташсем. Çавăн пек задачăна тытăнасси аслă ĕçе тытăнассине пĕлтерет. Анчах большевикла парти халăх массисемпе çыхăнса тăни çав тери çирĕп, епĕр пирĕн партин çав аслă задачăна чыслăн пурнăçлама мĕн кирли пурте пуррине шавса тăратпăр (Алă çупассĕ) Çапла ĕнтĕ, коммуниссемпе пĕтĕм совет халăхĕ ма син блокĕ çинчен ĕç пырат. Аслă Совет суйлавĕнче пирĕн, совета хăйне май, пĕрлĕх халăх фрончĕ, курман-илмен вăйлă тата пĕлтерĕшлĕ пĕрлĕх халăх фрончĕ пулса тăмала. (Алă çупассĕ):

Коммуниссем партире тăман массăпа, пĕтĕм халăхпа тунă çавăн пек блок çинчен пирĕн чикĕ леш йенчи туссем халĕ ĕмĕтленме çеç пултараççĕ. Епĕр ăна вăй ене шелле месĕр, йăвăрлăхсенчен хăрамасăр çине тăрса кĕрешнипе турăмăр, епĕр ĕнтĕ пĕтĕм чунпа чикĕ леш йенчи туссемпе пĕрле, вĕсем халĕ ĕнтĕ шанчăклăн çапла калаççĕ: Çитĕ вăхăт, пирĕн те вăл пулĕ. (Тăвăллăн алă çупассĕ)

## II. Тулти хăрушлăх умĕнчи пирĕн задачсем

Пирĕн ĕçе вăйăр условисенче пуçласа тума пымала пулчĕ. Пирĕн мĕн халиччен социализм строительстви ĕçне хамăр тĕллĕн, капиталисăмлă государствăсен ташмалла йĕритавралăхĕнче туса пыма тивет. Çавăнта пулат рабочисемпе хресченсен пирвайхи социалисăмла республика положенин уйрăмлăхĕ.

Хамăр ĕçĕн тĕрĕслĕхне ĕненсе, епĕр чи пуçламĕшĕнчех пĕрне кана—халăха мирлĕ ĕçлемели май туса парассине, совет стройĕн, халăха çав мĕн пур господа капиталиссенчен, помещиксенчен, тата генерал-урйадниксен йыткĕгĕвенчен хăтарна стройăн вăйне кăтартмали простой май шыранă.

Анчах пирĕн клас тăшманĕсем те, експлотатăрсенчен хăтарнă халăх вĕсемшĕн хăрушă вăй пулнине пĕлсе тăна. Çавăнпа вĕсем, мире аркатса тăкас тесе, совет республикен мирлĕ аталанăвне чăрмантарас тесе, пурне те тунă.

Совет влаçне хӳтĕлесе хăварма, тăшмансенчен позици хыççăн позици турса илме рабочисемпе хресченсен йунне сахал мар йухтарнă.

Пирĕн хамăр çĕршывăн территорийĕ çинче темиçе çул умлă-хыçлă йутçĕршыв интервенчĕсене тӳсме пулчĕ, анчах çапах та епĕр вĕсене хамăр государствăран йаланлăха нимĕн йулми кăларса сир петрĕмĕр. (Алă çупассĕ).

Анчах тулашри капиталисăмлă йĕритавралăх пурнат-ха. Кашни çуркунне пекех пирĕн каллех те калех империалиссем йенчен вăрçăпа тапанассине кĕтмеле пулнă. Пайан пĕрисем хăратнă—ыран теприсем. Епĕр çав тери хытă кĕрешне мирлă передышкăна аркатса тăкас тесе вĕсем мĕн хăтланман пулĕ.

Уйрăм тапхăрсенче Совет Сойузĕшĕн вăрçă хăрушлăхĕ мĕн тери пысăк пулни çакăнтан та курăнат: совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче ун çинчен Ленин пĕрре кăна мар çырнă, пайарахпа ун çине Сталин йулташ пĕрре кăна мар кăтартса панă.

Большевикла партипе совет влаçĕ, пурнăçăн мирлĕ тапхăрне малала тăсас тесе, совет халăхне

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

*Националнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем*

Стецкий Алексей Иванович—ПС(б) Парти Тĕп Комитечĕн парти пропагандипе агитаци пайĕн пуçлăхĕ. Вырăс. Националнăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар хулинчи № 496 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Краснов Петр Дмитрийевич—ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ. Чăваш. Националнăçсен Советне депутата суйлама Çĕрпӳри № 498 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

## Тĕпком чĕнĕвне ырлаççĕ

СЕНТЕРВĂРРИ (Хамăр корр. телефонпа тăрăх). Районри ĕççыннисем Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ мĕн пур суйлавçăсене чĕнсе калаписене хавасланса йышăнаççĕ.

Декаберĕн 9-мĕшĕнче Тĕпком чĕнĕвне ăнлантарса пама йалсене 53 коммунис, 53 комсомолĕс кăларса йанă. Куйсĕр пуçне колхозсенче 371 агитатор ĕçлеçĕ.

Йур пухусенче те ĕççыннисем: „Епĕр Парти Тĕпкомĕн чĕнĕвне хавасланса йышăнатпăр, декаберĕн 12-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек пулса суйлав урнисем патне пырса хамăр округра Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн: Чкалов, Андрейева, Сахйанова йултапçĕсемшĕн сасăлатпăр", тесçĕ.

В. Васильев

*В. ЧКАЛОВ*

Совет Сойуз Геройĕ

# Тăван çĕршыва сыхласси—ССР Сойуз гражданинĕн чи таса тивĕçĕ*)

1936 çулти нойаберĕн 25-мĕшĕнчи касхи сехетсене аса илетĕп. Советсен Пĕтĕм Сойузри Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйесĕн ларăвĕ пырат. Трубунă çинче—çĕнĕ Конституци туса паракан Сталин йултăш.

Сталин йулташ пирĕн Конституци пройектне критиклекен буржуалă критиксене, уйрăмăнах—Германи официозĕнчи господасене, Шчедринăн кĕске ăслă бӳрократĕ йевĕр ССР Сойузне хупса лартма шутлакансксерсене, йепле ăста çĕмĕрнине итлесе лартăм епĕ „...Ку вĕсенчен килмест",—терĕ Сталин йулташ. Сйес тăвăллăн алă çупрĕ.

Çулпуçа халăх алă çупрĕ. Тăшман ССР Сойузне „хупса лартма", чикĕне пăсма хăтланнине çĕршыв хайар отпор парассине халăх пĕлсе тăнă. Совет чиккисен пикам тĕкĕнмелемарлăхне хурçă нарком К. Йе. Ворошилов йертсе пыракан Хĕрлĕ Çар хӳрал тăнине халăх пĕлсе тăрат.

Епĕр пирĕн çĕршыва 14 государствă хупăрласа илнĕ чухнехи иртнĕ походсене астăватпăр. Вĕсем йăлтах техникăпа хĕçпăшалланса, самолетсем çинче, танксем çинче ларса, хăватлă артиллерипе пынă. Вĕсем çурçĕртен те, кăнтăртан та, хĕвеланăçĕнчен те, хĕвелтухăçĕнчен те çар карапĕсемпе тапăнса килнĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çар ун чухне çамрăк та вăйсăр хĕçпăшалланнă çар пулнă, анчах шурăгвардии генералĕсем унран йепле хытă тарнă, полйаксем, йапунцăсем тата нимĕçсем йепле тарнă!

Пирĕн тăшмансем унтанпа сахал мар вăрçăпа хăратрĕç. Миçе хут вĕсем пирĕн çине походпа пухăнчĕç! Анчах пирĕн ӳссе тĕрекленнĕ, хӳхĕм самолетсемпе, танксемпе, шыв айĕн çӳрекен кимĕсемпе хĕçпăшалланнă вăйлă та хăватлă Хĕрлĕ Çар постра тăнă, тăрат те.

Совет территорисене йарса илесси тата, уйрăмăнах, ССР Сойузĕн Совет Украинине татса илесси пирĕн задачă пулат, тесе Германи фашисăмĕ уççăнах пĕлтерчĕ. Йапони генералĕсем Советсен Инçет Хĕвелтухăçĕ çинчен ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çити хĕçпăшалланаççĕ.

Анчах Германипе Йапони кăна мар,—Итали, Полшă, пĕтĕм капиталисăмлă тĕнче хĕçпăшалланат. Вăрçа хатĕрленсе, фашиссем хĕçпăшал вăйĕсене кăна мар мобилизацилеççĕ. Çĕршывăн пĕтĕм економикине, промышленнăçа, транспорта, йалхуçалăхне вирлĕн хатĕрлесе пыраççĕ.

„Çитес вăрçă,—тесе çырат Германи çар сыннисен органĕ „Дейчевер",—мĕн пур иртнĕ вăрçăсенчен нумай йунлăрах та пĕтереслĕрех пулат: çĕнтерессишĕн мар тата кирлĕ таран вĕлерсе пĕтерсе çĕмĕрсе тăкассишĕн мар, тăшман хирĕçнине авса хуçассишĕн мар вĕлерсе пĕтерсе çĕмĕрсе тăкĕç,—пĕтерес тесе пĕтерĕç..."

Мĕн тери ирсĕр те йĕрĕнчĕк господа фашиссем! Пĕтерессинче пулат вĕсен пурнăç тӳпсăмĕ!

Германи „Йункерсĕсем" тата „Гейнкелĕсем", Италин „Капронисем" тата Йапонин бомбардировшчикĕсем Испанийе Китайăн хӳтлĕхсĕр хулисемпе йалĕсене мĕншĕн вутпа çунтарса тĕп туни, çуртсăр-мĕнсĕр тăрса йулнă хĕрарăмсене тата ача-пăчасене мĕншĕн пулеметсенчен пере-пере вĕлерни паллă пулса тăрат ĕнтĕ.

Хăйсен хĕçпăшалĕсене, хăйсен економикине, хăйсен дипломатине мобилизацилесе, фашиссем шпионаж, диверси, политикăлă вĕлерӳсем организацилеççĕ. Совет Сойузĕн хăватне хавшатма тата вăрçă пуласс-мĕн пулсан ăпа айа тума фашиссем троцкисла-бухаринла капиталисăм реставратăрĕсен, çав çынвĕлерепсен тата предателсен, тăван çĕршыва сутакансен лагерĕнчен хăйсен агенчĕсене пухаççĕ.

Тăшмансен ĕмĕчĕ çитмерĕ, вĕсен планĕсене аркатса тăкнă. Мухтавлă чекист Йежов тата унăн вирлĕ наркомвнуделцисем шпионсен бандине çĕмĕрсе тăкрĕç.

Вăрçă чĕртекенсем хайар çухату тӳсрĕç!

Фашисла вăрçă чĕртекенсем урса кайса вăрçа хатĕрленнине хирĕç тата вĕсен провокацийĕсене хирĕç Совет Сойузĕ çирĕп те улшăнми мир политикипе, хăйĕн оборонă хăватне тата ытларах тĕреклетнипе ответлет.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыракан çĕршыв халăхĕсем вăрçă чĕртекенсенчен тухакан хăрушлăх мĕне пĕлтернине аван пĕлеççĕ. Епĕр Сталин йулташ капиталисăмлă йĕритавралăх çинчен каланă сăмахсене астăватпăр. Унăн кăтартăвĕсене пĕтĕм совет халăхĕ тăна илнĕ. Совет патриочĕсем хăйсен çĕнтерĕвĕсепе никам çĕнтерейми хурçă стена пек хӳтлесе тăраççĕ.

Совет патриочĕсем халăх тăшманĕсене, изменниксене, предателсене, пахаран та паха Сталинла Конституци çине çырса хунă çĕнтерӳсем çине тапăнма пăхакансене пурне те вилĕмле кураймаççĕ.

Совет патриочĕсем хăйсен тăван çĕршывне, хăйсен партине, хăйсен йуратнă çулпуçне Сталин йулташа вĕçи-хĕррисĕр йуратаççĕ.

„Тăван çĕршыва сыхласси—ССР Сойузĕн калпни гражданинĕн чи таса тивĕçĕ",—тесе çырнă Сталинла Конституцире. Пирĕн çĕршывăн мĕлйуншар патриочĕсем, Совет Сойузĕн оборонă хăватне тĕреклетсе пырса, хăйĕн Хĕрлĕ Çарĕшĕн, унăн вăйĕçе хăватне ӳстерессишĕн вĕçĕ-хĕррисĕр тăрăшса, çав сăмахсене таса тытса пурнаççĕ.

Совет халăхĕн хӳтĕлемелĕх пур! Сталинла Конституцин улттăмĕш статйинче çапла çырса хунă:

„Çĕр, çĕрайĕнчи пуйанлăхсем, шывсем, вăрмансем, заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, рудниксем, чукунçул, шыв тата сывлăш транспорчĕ, банксем, çыхăну хатĕрĕсем, государствă организацилене шултра йалхуçалăх предприйатисем (совхозсем машинăпа-трактор станцисем т. ыт. те çавнашкаллисем), çавăн пекех коммуналлă предприйатисем тата хуласемпе промышленнăçлă пунктсенчи пурăнмали çуртйĕр тĕп фончĕ—государствă харпăрлăхĕ, урăхла каласан, пĕтĕм халăх пурлăхĕ пулса тăрат".

Çавсене пурне те çĕнсе илнĕ тата çырса хунă. Сталинла пйатилеткăсем пирĕн çĕршыва тимĕр бронйă тăхăнтарчĕç. Пирĕн йăвăр индустри пире оборонă хатĕрĕсене пурне те пачĕ, Йал пурнăçĕн колхоз йĕркийĕ чухăнлăха тата выçлăха йаланлăха пĕтерчĕ. Çĕршыв пуйан пурнăçпа пурнат.

Мĕнпе мухтанма пултарат капиталисăмлă тĕнче? Хресченсене тусăнтарса пĕтернĕ, рабочи класа пусмăрласа çитернĕ, пур çĕршывсенче те безработицă, мĕлйуншар çынсене выçă вилĕм патне çитерсе тăратнă. Епĕ Америкă хулисенче пултăм. Епĕ унта пĕлĕте кармашакан çуртсемпе йунашар чухăнлăх кварталĕсене куртăм. Мĕн пулса пырат-ха фашисла çĕршывсенче? Германире икĕ ернере пĕрре тухса тăракан „Виртшафт унд статистик" журнал пĕлтернĕ тăрăх, 1936—37 çулсенче хĕлехи пулăшу кирлĕ текеннисем 10,7 мĕлйун çын пулнă. Вăл вĕт „Виççĕмĕш империнчи" пĕтĕм халăхăн 17 проц. патне капăшат!

Выçăпа хăйсене хăйсем вĕлерни çинчен фашисла пичет те пĕлтермесĕр тăма пултараймаст. Çемйи-çемйипе газпа пăчăхса вилеççĕ: Хăйсен ачисене ашшĕсем персе, амăшĕсем шыва путарса вĕлереççĕ.

Çĕнĕрен кăларнă саккун тăрăх, Германире тырпул акса тăвакансем пурте хăйсен пĕтĕм тырпулне государствăна памала. Çав саккуна пăсакансене питĕ хытă айăплаççĕ—тĕрмене хупаççĕ, каторгăна йараççĕ тата укçан штраф хураççĕ.

Полшăра хресченсен массăлă забастовкисем пыраççĕ. Полшă жандармисем пăхăнман хресченсене персе пăрахаççĕ. Пĕтĕм Полшă тăрăх карателнăй експедицисем тискерленсе çӳреççĕ.

Италин чылай хулисенче ĕççыннисем пурнăç хакланнине тата безработицăна хирĕç кĕрешеççĕ. Масса хулинче хĕрарăмсемпе ача-пăчасен пысăк демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Демонстрантсем муниципалитет çурчĕ патне пырса хăйсен ашшĕсене тата упăшкисене Испанирен кайала таварма ыйтнă. „Есĕр вĕсене Африкăра ĕç пама пултăр,—тесе кăшкăрнă демонстрантсем,—вĕсене Испанийе вилме йатăр!".

Çавăн пек ĕнтĕ капиталисăмлă çĕршывсенчи савăнăççăр пурнăç.

Пирĕн? Халăх хуçалăхĕн улăпла ӳсĕмĕ, пысăкран та пысăк строителствă, безработицă çукки, йышлă массăсен аван пурнăçĕ, култтурă ӳсĕмĕ, оптимисăм, паттăрлăх, хăйулăх тата ирĕклĕ стахановла ĕç—çаксем пирĕн пайанхи социалисăмлă пурнăçăн паллисем пулаççĕ.

Епĕ çырусем нумай илетĕп. Рабочисем—çамрăксемпе ваттисем, колхозниксемпе колхозницăсем çыраççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕсем çинчен, хăйсен пурнăçĕпе вĕренĕвĕ çинчен каласа параççĕ. Колхозсенчен савăнăçлă хыпарсем килеççĕ—вăйлă тырпул çинчен, пысăк тупăшсем çинчен çыраççĕ. Хăйсен ĕçкунĕсем çине 600 пăта йахăн тырă тата 2000 тенкĕ ытла укçан илнĕ çемйесем пур. 200—300 пăт тырă илни ĕнтĕ йĕрки-йĕркипех.

„Пирĕн революцин паллă уйрăмлăхĕ,—тесе каланă Сталин йулташ,—çакăнта пулат: вăл халăха ирĕклĕх кăна мар, материаллă ырлăх та, пуйан та культурлă пурăнмали май та пачĕ".

Пирĕн тăван çĕршыв тулли, телейлĕ пурнăçпа пурăнат. Ленин—Сталин партийĕ халăхăн ырă пурнăçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшат.

Пирĕн мĕн пур çĕнтерӳсене Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ хурал тăрат. ССР Сойузĕн халăхĕсем хăйсен Хĕрлĕ Çарне хĕрӳллĕн йуратаççĕ. Çав хĕрӳ йурату пур çĕрте те, вак тĕвеккенче те ĕнтĕ палăрат. Вăл Алма-Ата колхозникĕсем Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ Йалавлă Уйрăм Çар боецĕсене тата Лăпкă океан флочĕн краснофлотцисене ешелонĕ-ешелонĕпе панулми парса парнеленинче те курăнат. Вăл колхозницă Маруçă Фирсова „Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи паттăр воин патне" тĕрлесе йанă питшăллинче те курăнат.

„Ил манран çак парнене,—тесе çырат вăл.—Шăл ушпа хăвăн хĕрлĕ пит-куçăра, епĕр хĕрсем, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи боецсене йепле йуратнине асра тыт".

Хăйсен çарне йуратни чикĕ хĕрĕнчи районсенче пурнакан колхозниксем Хĕрлĕ Çара тата пирĕн мухтавлă пограничниксене хытă пулăшнинче палăрат.

Совет Сойузĕпе Китай чиккинчи ответлă участкăсенчен пĕрне хурал тăракан Джаркент отрйадĕнчи пограничниксем çакăн пек пулăшу çинчен каласа параççĕ. Йулашки çулсенче вĕсем, „Красный Восток" колхоз членĕ Симбек Уразбайев пулăшнипе, бандитсене, диверсантсене, шпионсене тата контрабандиссене сахал мар тытнă. Елĕк бай патĕнче кĕтӳç пулнă Уразбайев тусенчи мĕн пур сукмак çулсене пĕлет. Пĕреччен Уразбайев хĕçпăшаллă икĕ пысăк бандă йĕрри çине ӳкнĕ. Çав бандăсене çĕмĕрсе тăкнă чухне пограничниксем темиçе çĕр

*) [illegible] брошурăран.

*Национальнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем*

Иванов Герасим Иванович— ПСК(б)П Обком секретарĕ. Чăваш. Национальнăçсен Совет-не депутата суйлама Вăрмарти № 499 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Горкин Александр Федорович —ССР Союзĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕ. Вырăс. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Канашри №500 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

## Аслă партишĕн савăнатпăр

Йунтапа, Елĕк районĕ, 9/XII (хамăр корр.). Пайан „Алмаз" колхоз членĕсемпе йалти ытти суйлавçăсен пухувĕ пулса иртрĕ. Пухура ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ чĕнсе калани-не сӳтсе-йаврĕç. Пуху йышăннă резолюцире çапла каланă:

— ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ мĕн пур суйлавçăсене чĕнсе каланине пĕтĕм чĕререн ырласа йышăнатпăр. Декаберĕн 12-мĕшĕнче пурте суйлава пыратпăр. Хамăрăн сасăсене савăнсах çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемшĕн, Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çынсемшĕн, пирĕн кандидатсемшĕн—Чкалов, Пумпур, Краснов йулташсемшĕн паратпăр.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ чĕнсе каланине пĕтĕм халăх сӳтсе-йаватъ

# Суйлавçăсем коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлама сăмах параççĕ

## Пĕр шухăшлă пулса сасăлатпăр

ПАТĂРЙЕЛ. Декаберĕн 9 мĕшĕ. (Хамăр корр., телефон тăрăх) Енерпе пайан районри учреждени-сенче, предприйатисенче, колхозсенче Парти Тĕпкомĕн чĕнĕвне пысăк çĕкленĕвпе сӳтсе-йаваççĕ. Пухусенче тухса калаçакансем Сталин йулташа хĕрӳлĕн саламлаççĕ. Вĕсем пурте пĕр çын пек пулса суйлава тухса большевиксемпе партире тăман кандидатсемшĕн сасăлама пулаççĕ.

Пайан Патăрйел район центрĕнче рабочисен, служăщисен, колхозниксен тата веренекенсен пĕрлешӳлĕ пухуве пулса иртрĕ. Вĕсем Парти Тĕпком чĕнĕвне вуласа тухнă хыççăн хăйсен резолюцинче çапла каланă:

— Епĕр Аслă Совета суйламали кун пурте пĕр çын пек пулса Ленин—Сталин партин чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн сасăлатпăр.

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ!

Çавнашкалех Кивĕ Ахпӳртри колхозниксемпе йединоличниксем Тĕпком чĕнĕвне пысăк хавасланăхпа сӳтсе-йаврĕç. Пухура Федор Салмин колхозник çапла каларĕ:

Сталинла Конституци пире пур не те пĕртан правасем панă. Пирĕншĕн парти йаланах тăрăшатъ. Пирĕн шухăш парти шухăшĕ. Епĕр коммуниссемпе партире тăман кандидатсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăлатпăр.

Резолюцире вĕсем çапла каласа хăварчĕç:

— Епĕр, колхозниксемпе йединоличниксем, пурте пĕр шухăшлă пулса партин чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн: Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн сасăлама тивĕçлĕ пулнишĕн савăнатпăр. Вĕсемшĕн пĕр кăмăлпах сасăсене паратпăр.

Парти Тĕпкомĕн чĕнĕвне сӳтсе-йавнă хыççăн Кивĕ Ахпӳртре пухурах 3 йединоличник колхоза кĕме зайавленисем пачĕç.

Пушкин.
Майков.

* О *

## Ленин Сталин партийĕ тавра тата çирĕп пĕтĕçетпĕр

Декаберĕн 8—9-мĕш кунĕсенче Советсен Дворецне туна çĕрте, институт общежитинче, Водосветăн 8-мĕш кватер çуртĕнче, Чăвашстройтестра тата ытти çĕрте те рабочисем, работницăсем, служăщисем, инженерла-техникла работниксем ПСК(б)П Тĕпкомĕ пур суйлавçăсене, рабочисене, хресченсене, хресчен хĕрарăмĕсене, Хĕрлĕ çара, совет интеллигенцине чĕнсе каланине сӳтсе-йавнă.

Чăвашстройтрестра пулса иртнĕ митингра ПСК(б)П Тĕпкомĕ чĕнсе каланине сӳтсе йавнă хыççăн çапла йышăнна.

— Епĕр, Чăвашстройтрестри рабочисем, работницăсем, служăщисем тата инженерла-техникла работниксем ПСК(б)П Тĕпкомĕ чĕнсе каланине ырласа, Ленинпа Сталин партине чĕререн йуратнине палăртатпăр.

Большевиксен партийĕ йертсе пынипе, партире тăманнисемпе блок туса ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали кун—декаберĕн 12-мĕшĕнче епĕр пурте пĕр харăс суйлава кайса, пурте пĕр шухăшлă пулса хамăр сасăсене çĕршывăн лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн: Стецкий, Чкалов, Андрейева йулташсемшĕн паратпăр.

Рабочисем, бригадăсем, стройкăсем хушшинче социалисăмла ăмăртăва сарса йарса стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕнче туна производствăлă çĕкленĕве çирĕплетсе, стройкăсенче ĕçтухăлăхне тата хытă хăпартатпăр.

Революцилĕ тимлĕхе вăйлататпăр, фашиссен троцкисла-бухаринла агенчĕсене, буржуалă националиссене тата вĕсене пулăшакансене çапса салататпăр, тĕпрен пĕтеретпĕр.

Ленин—Сталин партийĕ тавра тата çирĕп пĕтĕçетпĕр!

Сывă пултăр большевиксен аслă партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç Сталин йулташ!

* О *

## Çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн

Пĕтĕм Союзри Коммуниссен большевикла партин Тĕпкомĕ пур суйлавçăсене, рабочисене, работницăсене, хресченсене, хресчен херарăмĕсене, Хĕрлĕ çара, совет интеллигенцине чĕнсе каланине сӳтсе-йавнă хыççăн, епĕр, Шупашкар макарон фабрикĕнчи коммуниссемпе партире тăман рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служăщисем, пĕтĕм коллективĕпе тата кашни уйрăман Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе социалисăмла строительствăра туна историлĕ пысăк çитĕнӳсемшĕн чĕререн савăнатпăр. Çавăнпа та Аслă Совета суйламали кун—декаберĕн 12 мĕшĕнче епĕр партире тăракансемпе партире тăманнисем пурте пĕр харăс суйлава кайса, пĕр шухăшлă пулса, хамăр сасăсене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, пирĕн тăван çĕршыван чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн: Стецкий, Чкалов, Андрейева йулташсемшĕн паратпăр, пирĕн округри пур суйлавçăсене те хăйсен сассисене вĕсемшĕн пама чĕнетпĕр.

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммуниссен большевикла партийĕ!

Сывă пултăр Сталин йулташ!

## Чкалов, Спасов, Коротков йулташсемшĕн сасăлатпăр

ЙĔПРЕÇ. (Хамăр корр., телефон тăрăх). Пайан Шăртан йалĕнче суйлавçăсен пĕрлешӳлĕ пухувĕ пулса иртрĕ. Пуху Парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине сӳтсе-йаврĕ. Прение 17 çын тухса каларĕç. Вĕсем пурте Октябĕр революци хыççăн ĕççыннисен пурнăçĕ пуйанланса культурланнине палăртаççĕ. Колхозри паллă стахановкă Йелизавета Иванова çапла каларĕ:

— Парти Тĕпкомĕ хăйĕн чĕнĕвĕнче патша Российĕнчи тискер пурнăçа тĕрĕс кăтартса панă. Епĕ çамрăк пулсан та ĕлĕкхи асаплă пурнăçа асăрватăп. Патша саккунĕ хĕрарăмсене йытă выранне те шут ламан. Хĕрарăм суйлав правипе усă курма пултарайман. Халĕ хĕрарăм хулара та, йалта та государствă управленинче арçынпа пĕртан правалă.

Ĕлĕкхи вăхăтра Шăртан йалĕнче хутла пĕлекенсем пĕр-икĕ çын кăна пулнă пулсан, халĕ унта инженерсемпе агрономсем 25 çын ытла.

Пуху йышăннă резолюцире çапла каланă:

— Епĕр Шăртан йалĕнчи суйлавçăсем декаберĕн 12-мĕшĕнче суйлав урни патне пырса Чкалов, Спасов, Коротков йулташсемшĕн сасăлатпăр.

Михайлов.

* О *

## Епĕр Андрейева, Чкалов, Краснов йулташсемшĕн сасăлатпăр

Ĕлĕкхи тискер патша саманинче хĕрарăма çын выранне шутламан. Вĕсенчен мăшкăланă, кулнă, хĕрарăм вăл „кăмака турчăки" тесе мăшкăланă. Хĕрарăма ун чухне хăйне çисе пурăнмалăх ĕçлеме те çĕр паман. Ун чухне хĕрарăмсене пуйан хуçасем тарçăра усраса, кунĕн-çĕрĕн ĕçлесен те тăрниччен çитермен, çапах та вĕсене пуйансем йытă выранне çеç шутланă.

Хĕрарăма ун чухне права паман пирки ниçта та тухса çӳреймен.

Епĕр 1917 çул хыççăн тел йлĕ вăхăтра çуралса ӳснĕ. Декаберĕн 12-мĕшĕнче пĕрремĕш хут Аслă Совета суйлас çĕре хутшăнатпăр.

Сталинла Конституци çеç хĕрарăмсене çул уçса пачĕ; суйлас тата суйланас правапа арçынпа пĕр тан усă курмала турĕ.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, Октябĕрти Аслă Социалисăмла революци хыççăн тухнă çĕнĕ Сталинла Конституци çинче çеç, хĕрарăма арçынпа пĕр тан правапа усă курмала тесе çырса хучĕç.

Хĕрарăм халь кирек-мĕнле ĕçре те арçынпа пĕр тан хăйĕн пултарулăхне кăтартатъ.

Епĕр çĕршывра телейлĕ Конституцине çырса паракан СТАЛИН йулташа чĕререн тав тăватпăр.

Сывă пултăр пирĕн аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Сывă пултăр Сталинла Конституци.

К. Михайлова
А. Алмазова.

* О *

## Суйлав пӳлĕмне кар пухăнатпăр

ИШЛЕЙ. Чăваш АССР Шупашкар йал суйлав округне кĕрекен Йетĕрнекасси суйлав участкинчи суйлавçăсен пухувĕ йышăннă резолюци:

Йетĕрнекасси суйлав участкинчи суйлавçăсем Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕн мĕн пур суйлавçăсене, рабочисене, хресченсене, хресчен хĕрарăмĕсене, Хĕрлĕ çара, совет интеллигенцине чĕнсе каланине ырласа, ăшă кăмăлпа, чĕререн йуратса йышăнаççĕ. Йетĕрнекасси суйлав участкинчи суйлавçăсен—хĕрарăмсен, арçынсен, колхозниксен, колхозницăсен, йединоличниксен, йединоличницăсен, профсоюз членĕсен пĕрлехи пухувĕ декаберĕн 12-мĕшĕнче суйлав пӳлĕмне кар пухăнса, хамăр палăртнă, чĕререн йуратнă, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, ĕççыннисен пурнăçĕшĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлекен кандидатсемшĕн: М. М. Сахйанова, З. А. Андрейева тата В. П. Чкалов йулташсемшĕн сасăмăра паратпăр, тесе йышăнатъ. Пуху Шупашкар йал суйлав округне кĕрекен мĕн пур суйлавçăсене хамăр палăртнă кандидатсемшĕн сасăлама чĕнет.

Пурте суйлава!

Сывă пултăр Совет власĕ!

Сывă пултăр пирĕн Советлă Социалисăмлă Конституци!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) партийĕ!

Сывă пултăр Аслă Сталин!

## Шефа илнĕ колхозсене пулăшрĕç

Педрабфакра суйлава хатĕрленес майпа вĕренӳ çулĕ пуçлансанах тĕрлĕ кружок ем ĕçлеме ты ăнчĕç. Кружок занятисем план тăрăх пулса пыраççĕ. Шефа илнĕ йалсене кайса комсомолецсем суйлав Положени çинчен ăнлантарса пыраççĕ. Çавăн пекех çамрăк суйлавçăсен пуххине темиçе хут та туса иртернĕ. Пухура суйлав Положени çинчен тата кăмсемшĕн сасăламалине ăнлантарса пачĕç. Хор куржокĕ икĕ хут йалсене кайса, 8-мĕш участкăри суйлавçăсене тата радио тăрăх çĕнĕ йурăсем йурласа пачĕ. Курмапынă суйлавçăсем пире алă çупса хаваспа кĕтсе илеççĕ.

П. Синичкин.

Коротков Сергей Ксенофонтович—орденоносец, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ. Вырăс. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Йĕпреçри №501 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Сахйанова Марийа Михайловна—ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партиле Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ. Бурйат. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар йал №497 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

*Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партийĕн Тĕп Комитечĕ партире тăман мĕн пур суйлавçăсене коммунис кандидатсемшĕн вĕсем хăйсем партире тăман кандидатсемшĕн сасăланă пекех пĕр шухăшлă пулса сасăлама чĕнет.*

(ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ чĕнсе каланинчен).

---

...така тата темиçе çĕр лаша тытса илнĕ. Бандитсем çав вылăхсене чикĕ урлă Китайа хăваласа кайма хăтланнă.

Пирĕн чикĕри колхозниксем пур çĕрте те чикĕ хĕрĕнчи çарсене çавăн пек пулăшу параççĕ.

Хăйсен Хĕрлĕ Çарне йуратни Слепова колхозницă тулли пурнăçпа пурăннинче те палăрат. Вăл ывăлне сухатнă. Унăн ывăлĕ йапон-манчжурсемпе çапăçнă чухне паттăрăн вилнĕ.

Манăн умра Слепова сырăвĕ. Вăл ăна Каспий тинĕс хĕрĕнчен хăйĕн ывăлĕ служит тунă чаçри боецсем патне йанă. Вăл сырат:

„Манăн ылттăн ывăлăмăрсем! Çак сырăва сырма пуçласанах манăн чи малхалĕ вăл çук. Манăн хуйăх вĕçĕ-хĕррисĕр. Анчах карчăка сирĕн пек лăплантаракан ырă сынсем пур-ха. Шел хамăн ывăла. Вăл манăн пĕртен-пĕр ывăл пулнă. Мĕн тăвас тетĕн-ĕнтĕ? Епĕ, ватă-скер, сирĕн ĕçсем çинчен тата сирĕн аслă командир çинчен нумай илтсе. Унăн портречĕ ман патра çакăнса тăрат. Сире пурне те, манăн ылттăн ывăлăмăрсем, тата сирĕн аслă командира салам калатăп. Сире пĕтĕм чĕререн пысăк телей тата чи хитре хĕрсем сунатăп. Пирĕн çĕре сирĕн хурал тăрăр. Тăшман килес мĕн пулсан, ăна тӳррех чĕререн çапăр. Çапла тума епĕ сире амăш пулса пиллетĕп".

Çав ватă колхозницăн сырăвĕнче чăн та мĕн чухлĕ ăшă йурату!

Пирĕн çĕршыв пиншер çĕнĕ сынсене, хăйсене хăйсем шеллемен, хăйулă паттăр çынсене вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Вĕсем хăйсен тăван çĕршывне чикĕсĕр йуратаççĕ, унăн чиккисене хăйсен кăкрипе хӳтлеме хатĕр.

Перекоп сывăхĕнчи легендарлă çапăçусем, Волочайевкăна штурмăлани, Царицына оборонăлани—çаксем революцилĕ паттăрлăхăн чи лайăх памйатникĕсем пулса ĕмĕрлĕхе йулаççĕ. Граждан вăрçин мухтавлă революцилĕ традицийĕсем пайан та Хĕрлĕ Çар пурнăçĕнче пурнаççĕ. Вĕсем—Совет авиацийĕн пысăкран та пысăк çитĕнĕвĕсенче. Вĕсем—совет пограничникĕсен паттăр ĕçĕсенче. Вĕсем—кулленхи пурнăçăн пысăк та пĕчĕк пиншер ĕçĕсенче.

Танкистсем йăвăртан та йăвăр маршсем тунă Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи сивĕ тайгара, йĕ çил тăвăллă латсăр çантăлăкра морйаксем ответлă вĕренӳ заданийĕсене пурнăçа кĕртнĕ тинĕç флочĕн карапĕсемпе ныв айĕн сӳрекен киммисенче, пехотинцăсем, артиллериссем, саперсем, свйазиссем тата летчиксем хăйулăхпа паттăрлăх образецĕсене кăтартнă тактикăлă вĕренӳсенче,—пур çĕрте те пирĕн революцин чи таса традицийĕсем пурнаççĕ.

Йапон-манчжурсемпе çапăçнă çĕрте Василий Баранова амантнă. Вăл йунпа йухнă, анчах паттăрăн çапăçса, пирĕн тăван çĕршывăн чиккисене хӳтĕлеме пăрахман. Ана, вăйсăрланса çитнĕскере, летчиксем йутçĕрщыва тытса кайнă. Унта ăна асаплантарса пĕтернĕ, пĕр сăмах та пулин хĕсĕ каларасшăн пулнă, анчах Баранов тайнă çинчен пĕр сăмах калармасăр герой пек, тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ пулса вилнĕ.

Çакă вăл революцин чи таса традицийĕ мар-им?

Нумай пулмаст Кремлре Иван Трунов красноармейцă Хĕрлĕ Йалав орденĕ панă. Вăл пĕр-пĕччен хĕçпăшаллă вуннилĕк бандита хирĕç çапăçма пуçланă. Лешсем пирĕн чикĕ урлă каçасшăн пулнă. Саккăрăшне вăл персе пăрахнă. Паттăр боец йулашки патронсене персе кăларса йанă тĕле тин пулăшу çитнĕ. Хĕçпăшаллă бандăна çĕмĕрсе тăкнă.

Кунта та революцин чи таса традицийĕсемех!

Хĕрлĕ Çар пурнăçĕнче, пирĕн пĕтĕм çĕршыв пурнăçĕнчи пекех, паттăрлăхпа хăйулăх тулли-йех. Хĕрлĕ Çар боецĕсем капитан Григорйев командоватъ тăвакан батальйонăн кулленхи пурнăçĕ çинчен Ворошилов йулташа акă мĕн каласа параççĕ:

„Пирĕн кулленхи пурнăçран, — тесе сыраççĕ боецсем, — хăйсен тăван çĕршывне вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнине кăтартакан, харсăрлăхпа хăйулăх çинчен калакан-вуншар тĕслĕх илсе кăтартма пулатъ.

Йулашки учение вăйлă йухакан йуханшыв урлă каçнă чухне взводăн кĕçĕн командирĕ Зырйанов тарăн çĕре лексе путма пуçланă икĕ боеца асăрхаса илнĕ. Зырйанов вĕсене çăлма шыва сиксе, иккĕшне те тата вĕсен аллинче пулнă пулемйотсене те çăлса кăларнă. Çăлса кăларнă боецсем, сыран хĕрне тухсан тӳррех „противника" персе пуçланă.

Тĕттĕм çĕр. Йуханшывăн тепĕр йенне сыхăну памала пулнă. Красноармейец Выбка çав задача пурнăçа кĕртес ĕçе хăй çине илет. Провод чĕркенĕ икĕ кусăпашкана хăй çине çавăрса хурса, вăл тӳррех тарăнăшне пĕлмен шыва сикет те, тепĕр йенче часах сыхăну йĕркелесе паратъ.

Епĕр Завйалов красноармейцă, хамăр батальйонри боеца, хăйне шанса панă социалисăмлă пурлăха хăйулăн çăлса постра пĕтнĕ боеца пихăçан та манас çук. Хăйне çулăм йарса илсен те, вăл хăйĕн постне пăрахса кайман...

Ленин—Сталинăн аслă партийĕ, аслă Сталин пирте çав пахалăхсене вĕрентсе çитĕнтерчĕç. Епĕр ĕнтĕ, социалисăмлă тăван çĕршывăн ывăлĕсем, совет чиккисене сыхласа тăрса, пĕлетпĕр: кирлĕ пулсан, пирĕнтен кашнийех тăшмана çĕмĕрсе тăкма хăйĕн йунне те, пурнăçне те шеллес çук".

Краснофлотцăсем тинĕс тăрăх ишсе чăтăмлăхăн, хăйулăхăн, хăйне хăй шеллеменлĕхĕн тата паттăрлăхăн лайăх тĕслĕхĕсене кунсерен мĕн чухлĕ кăтартаççĕ! Манăн йулташсен — Сталинла летчиксен çавăн пекех хăйулă тĕслĕхсем мĕн чухлĕ пулĕ!

Хĕрлĕ Çарăн питĕ пысăк резерв пур. Вăл—маттур çамрăксем. Вĕсем йаланах тăван çĕршыва сыхлакансен ретне тăма ĕмĕтленеççĕ.

Призывниксем саккунлă летотăсем илмен тĕслĕхсем нит, нумай. Федор Тынчук призывникĕн ăрăмĕ (Буденный йачĕпе тăракан колхозран, Смоленск облаçĕ), хăйĕн упăшкине летотă панипе пĕлсен, Парцеври призыв комиссине çапла заявлени сырса йанă: „Пире летотă кирлĕ мар, епĕ пурăнма пултарап. Епĕр упăшкампа ĕçлесе илнĕ çимĕçсем икĕ çул пурăнма çитеççĕ. Ан тив, Федор пирĕн тăван çĕршыва мухтавлăн служит тутăр".

Пирĕн старниксем патша вăхăтĕнчи призывсене астăваççĕ. Салтак ачисем хăйсен хуйăхне ерех ăнне путарнă, çемйисем макăрнă. Çав кунсенче пĕтĕм Российă макăрнă.

Халĕ ашшĕ-амăшĕсем, хăйсен ывăлĕсене Хĕрлĕ Çара асатнă чухне, калама çук хĕпĕртесе савăнăç куççулĕпе макăраççĕ. Вĕсен ывăлĕсем чыслă обйазаннăçа, хăйсен чи таса тивĕçне пурнăçа кĕртме каяççĕ.

Асатса йанă чух калана сăмахсенче ашшĕ-амăшĕсем ывăлĕсене пĕр наказ параççĕ: социалисăмăн телейлĕ çĕршывне тивĕçлĕн сыхлакансем пулăр тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн пурнăçа ан шеллĕр!

Пирĕн йал йурăсенче те новобранцăсем çинчен çĕнĕлле йурлаççĕ. Пурăсем маттур, тăван çĕршыва вĕçсĕр йуратнă, сывлăшпа сывлаççĕ, вĕсенче тăшмана курайманлăх туп-тулли.

Çак кунсенче çеç епĕ Башкирйен çыру илтĕм.

„Манăн чăтма çук летчик пулас килет,—тесе çырат 14 çулхи шкул ачи Виктор Сорочинский,—совет чиккисене ĕççыннисен тăшманĕсенчен сыхлас килет".

Летчик професийĕ паттăрлăхпа тата хăйулăхпа сыхăнса тăрат. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршывра ăна хытă хисеплеççĕ.

Буржуалă çарсенче çынсем хăйсене хăйсем вĕлерни çинчен тата çартан тарни çинчен йутçĕршыв пичечĕ сахал мар пĕлтерет.

„—Сана хĕнемесен, санăн йултапшна хĕнесе тăкаççĕ,—тесе каласа паратъ Манчжоу-Го çарĕнчен тарнă салатак.— Сана йатламасан, санăн йултапшна йатлаççĕ. Анчах пимрен часрах йапонцăсем сапран та, санăн йулташран та мăшкăлама ĕлкереççĕ. Алсем тăрăх, пит-куç тăрăх, çурăм тăрăх пушăпа çапаççĕ, патакпа çапаççĕ, винтовкă приклачĕпе хĕнеççĕ".

Хĕрлĕ Çарта пиншер командирсемпе боецсем çар служби̇не ĕмĕрхи професси туса хураççĕ. Акă мĕн сырат красноармейец Харитон Полаков хăйĕн командованийĕ патне:

„Часть командованийĕнчен мана мухтавлă Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ Йалавлă Уйрăм Çар ретне ĕмĕрлĕхе хăварма ыйтатăп. Епĕ хамăн тăван çĕршыва йурататăп тата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа, Ворошиловпа Блюхер йулташсене тупа туса çапла сăмах паратăп: тăшмансем пирĕн чикĕ çине тапăнсан, епĕ чикĕне хӳтлеме малтан кайăп, кирлĕ пулсан, ушăн хамăн пурнăçа парăп".

Валентин Котельников пĕтсен, Семен Лагода тăшман пульли тивнипе ӳксе вилсен, Мичурина вĕлерсен, вĕсен вырăнне вĕсен тăванĕсем тата вĕсемпе пĕр йал çыннисем тăчĕç. Халăх тăшманĕсем, фашисăм агенчĕсемпе вĕсен хуçисем, Совет Украинине Совет Приморйине тытса илме ĕмĕтленекенскерсем, çавăн çинчен уйрăмăнах хытă шутласа пăхмала. Пичченĕшĕн шăлнĕ, ывăлĕшĕн ашшĕ, йулташĕшĕн йулташĕ—патриотсем тăван çĕршыва сыхлас тĕлĕшри хăйсен чи таса тивĕçне шăпах та çавăн пек ăнланаççĕ.

Совет халăхĕн хăйĕн тăван çĕршывне хӳтлемелли пур. Хĕрлĕ Çар, социалисăмлă индустри çине таянса, хăйне чи малта тăракан хĕçпăшалпа, чи малта тăракан техникăпа тумлантарчĕ. Епĕр хăйулăн калама пултаратпăр: тĕнчере пирĕн мухтавлă, паттăр Хĕрлĕ Çар пек чи малта тăракан хатĕрсемпе хĕçпăшалланнă çар урăх çук.

Пирĕн пиншер çĕнĕ самолетсем пур. Самолетсем тата моторсем тăвас тĕлĕшпе пирĕн заводсем йутçĕршывсене йăхăнасран йăлтах тухрĕç, вĕсем малта тăракан капиталисăмлă фирмăсемпе тупăшма та хатĕр. Авиаци промышленнăçĕнчи пит пысăк çитĕнӳсене партипе правительствă, чи малтан—Сталин йулташ калама çук хытă тăрăшнине пула тунă.

Епĕр хăватлă, тĕл перекен, инçете перекен артиллери туса хутăмăр. Пирĕн чи лайăх танксем тата бронемашинăсем пур, хими оборонин мĕн пур хатĕрсем пур.

Совет Союзĕ—тинĕс держави. Сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче епĕр хăватлă тинĕс флочĕ, çав хисепре Çурçĕрте те, Лăпкă океанра та хăватлă флот туса хутăмăр.

Пирĕн маттур пехота çинчен, хăйулă утлă çар çинчен, пирĕн саперсем, свйазиссем т. ыт. çинчен калама та çук. Пур йышши çарсене хатĕрлĕх çĕрте те епĕр пит пысăк çитĕнӳсем турăмăр.


Совет Союзĕ—халăх хăйĕн телейне хăй тупнакан тĕнчипе пĕртен-пĕр çĕршыв. Çав телейе халăха Ленин—Сталин партийĕ пачĕ, çав телейе халăха тĕнчери чи демократиллĕ Конституци туса паракан аслă Сталин пачĕ.

Совет халăхĕ, унăн чи лайăх ывăлĕсем тăван Сталин ĕçĕшĕн, тăван çĕршыв телейĕшĕн хăйсене пĕтĕмĕн йулми пама хатĕр.

Господа фашиссем Мускаври „Серп и молот" заводри Иван Белоусов рабочи калана сăмахсене асра тытчăр:

—Пире ĕлĕк таçти хăйамата, темшĕн вăрçма империалисăмлă вăрçăна хăваланă. „Куçшăн куç, шăлшăн шăл",—тесе каланă пире. Халĕ ĕнтĕ, вăрçă пулсассăн, пур чухне, хӳтĕлемелĕх пур чухне, епĕ тăшмансене калатăп:

„Куçшăн—икĕ куç, шăлшăн вара пĕтĕм йанах!"



# Коммуниссемпе партире тăманнисен суйлав блокĕ çинчен

*(В. М. Молотов йулташ доклачĕн йулашки)*

вăрçă вăрçасран хăтарас тесе тата халăха малала та мирлĕ ĕçлемели май парас тесе, мĕн кирлине пурне те тунă.

Епĕр çакна тума пултартăмăр: пирĕн çĕршыв 15 çул ытла ĕнтĕ мирлĕ условисенче пурнать, çав перерыва начар уса курнă, епĕр халăх хуçалăхне хăпартас, культурă строительствине ÿстерес, халăх пурнăçне çĕнĕ, социалисăмлă никĕс çинче çĕнетес тĕлешпе сахал ĕçленĕ, тесе никам та калама пултараймасть. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн çĕршыв халăхĕ вăрçăсемпе тертленсе çитнĕ пулнă. Вырăс-Йапон вăрçипе Россия хутшăннă йулашки империалисăмлă вăрçă хушши сакăр çултан кăшт çеç ытларах пулнă. 1905 çулта Российăна Йапони вăрçинче çапнă. 1914 çулăн вăрçĕренче вăл çĕне тата та йунлăрах, темиçе çул хушши пына вăрçа кĕчĕ. Паллах, халăх миршĕн хыпса çуннă, вăрçăран хăпса сывлăш çаврассишĕн хыпса çуннă.

Совет влаçĕн чи пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри çакă пулать тесе шутламала: йулашки вунçулă çул хушшинче пирĕн халăх вăрçă вăрçасран хăтăлса пурнать. (Алă çупаççĕ).

Кам халĕ çĕнĕ вăрçă пуçарма васканине епĕр пĕлетпĕр. Камăн килте пуçĕш те йеркерĕ мар, камăн ĕçĕсем çирĕп мар, çав васкать (кулаççĕ). Сăмахран каласан, патша правительстви те хăйен ури айĕнче çунăран ĕнтĕ 1905 ç. тата 1914 ç. вăрçăсене сыхланса кайнă.

Пирĕн положени ун пек мар, çавăнпа та епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн çине тăрса кĕрешетпĕр. Çав политикă коммуниссемпе партире тăман массăсемпе тунă суйлав блокĕн никĕсĕ пулма пултарасси тата пуласси пирки епĕр иккĕленсе тăмастпăр. (Алă çупаççĕ).

Епĕр пирĕн тăшмансене пуçпех сĕмĕрсе тăкрăмăр—ăна никам та тунма пултараймасть. Анчах совет халăхĕн тĕп тăшманĕ пирĕн çĕршыв тулашĕнче, вăрçăла империалисăм лагерĕнче, уйрăмăнах фашисла çĕршывсенче. Вăл пирĕн халăх массисем хушшинче хăйне валли терек тупма пултараймасть, анчах çавăнпа та вăл, пирĕн строительствăна сăтăрлă ĕçсемпе, диверсисемпе, йунаса харатнисемпе тата террорпа сăтăр тăвас тесе, ытларах вăй хурать. Çавна тума йут çĕршыв разведкисем, тĕрлĕрен хăравçă чунсемпе уса кураççĕ, çавна тума вĕсем тĕрлĕрен шпионла-троцкисла тата рыковла-бухаринла сăтăрçăсене, диверсантсене, пирĕн çĕршыв оборонине хавшатма хатланаканскерсене, чикĕ леш йенчи хăйсен шурвăрди-меньшевикла агенчĕсем урлă йут çĕршыв государствисемпе Совет Союзĕ хушшинчи хутшăнăва пăсма тапаçланаканскерсене, тупса йанă. Епĕр çав факта шута илмесĕр тăма пултараймастпăр. Пирĕн çав мĕн пур предателĕсене, измениксене, провокатăрсене тата шпионсене вĕçне çити тăрă шыв çине кăлармала. (Алă çупаççĕ).

Вĕсем пирĕн совет çуртне мĕнле шăтăк çуракран хĕсĕнсе кĕнине никамран та лайăх пĕлетпĕр, епĕр ĕнтĕ вĕсене шăп çамкаран çапма никамран та лайăх вĕренсе çитрĕмĕр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Çав йут çĕршыв буржуазин лазутчикĕсен планесем тулашран вăрçăпа тапăнма хатĕрленессипе çыханса тăнă пирки, весем пирĕн халăхăн мирлĕ ĕçне аркатса тăкма ĕмĕтленнĕ пирки, пирĕн вĕсене шутра тытмала.

Çавсем пурте вĕсем çĕршыв оборонине тĕреклетмели пысăк ĕçсем тума хушаççĕ. Епĕр çав ĕçсене çине тăрса тăватпăр, епĕр Хĕрлĕ çара тĕреклететпĕр, оборонă промышленнăçне тĕреклететпĕр тата, пирĕн кашни завод тата пирĕн кашни колхоз пирĕн хуçалăхăн, культурăн тата государства оборонин крепăçĕ пулăр тетпĕр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Епĕр çапла тунипе тата епĕр обороннă нушисемшĕн ытти хашпĕр нушасене килентерессинчен те каçса илнипе тĕрĕс тăватпăр, тесе шутлатăп епĕ. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Коммуниссемпе партире тăман массăсен блокĕ çав ĕçсе те пире майлă тăрĕ, тесе шанатпăр епĕр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Епĕр пирĕн гражданcене мирлĕн ĕçлемели май туса парас йатпа, пирĕн халăх тăвакан коммунисăм йачĕпе мир политикĕшĕн тăратпăр. Пурте пĕлеççĕ, çавна хирĕç хăшпĕр фашисла государствăсем коммунисăма хирĕç иккĕн тата виççĕн вăрçăлă союз тунипе ответлеççĕ. Ăна çапла тăваççĕ: ÿкес мар тесе, иккĕн алран-ал тытаççĕ. (кулаççĕ, алă çупаççĕ), иккĕн, виççĕн, тен, тăваттăн та, паллах, харпăр хăйсен вăйĕсене ĕненменнисем ĕнтĕ, алран-ал тытаççĕ. Анчах вĕсем, алран-ал тытса, хăйсене хăйхи хăрушлăхран çăлаймаççĕ-ха, вĕсен ура айĕнчи никĕс çухалса пырать. (Алă çупаççĕ).

Пире вăрçă кирлĕ мар,—ăна пурте пĕлеççĕ. Епĕр мир ĕçĕшĕн, кĕрешÿ, кĕрешĕпĕр те. Кунга тата менле доказательствă кирлĕ?

Пахăр-ха, пирĕн Кремль çинчи пилĕк вĕçлĕ çăлтарсем йепле мирлĕ çунаççĕ. Вĕсен çутти инçете те шанчăклăн çутатать. Çав çăлтăрсем Му кавра мĕн пур çĕртен курăнаççĕ, тесе калаççĕ. Тата вĕсем Совет Союзĕн мĕн пур кĕтесĕсенчен курăнаççĕ, тесе калаççĕ. (Алă çупаççĕ).

Ва. çă-мĕн пулас пулсан, Совет Союзĕ çине вăрçăпа тапăнса килес-мĕн пулсан, менле пулĕ?

Çавна хирĕç епĕр калама пултаратпăр: Совет Союзĕ çине вăрçăпа тапăнас-мĕн пулсан, тапăнака ĕ пирĕн хурçă хÿлĕх вăйне те, пирĕн çĕршыв тулашĕнче инçете çутатакан рубинла совет çăлтăрĕсен суттин вăйне те курĕ. (Нумайччен алă çупаççĕ).

## III. Пурте суйлава!

Большевиксем çавсене пĕтемпе хисепе илсе, партире тăманнисемпе суйлав блокĕ тума сĕнеççĕ. Большевиксем çавсене хисепе илсе, Аслă Совет суйлавĕнче коммуниссене партире тăракан кандидатсемшĕн кăна мар партире тăман кандидатсемшĕн те вĕçне çити тăма сĕнеççĕ, партире тăман суйлавçăсем пур те коммуниссемшĕн те, партире тăман кандидатсемшĕн те çавăн пекех тăрĕç, тесе шутлаççĕ (Алă çупаççĕ).

Пурте суйлава, декаберĕн вуниккĕмĕшĕнче, пурте пĕр çын пек, Аслă Совета суйлама кайар! Çакна коммуниссемпе партире тăман граждăнсен суйлав блокĕн хăватлă сассипе каламала. Çав задача мĕн чухлĕ лайăхрах ĕçе кĕртĕпĕр, коммуниссемпе партире тăманнисемпе тунă суйлав блокĕн анаçăвĕсем çавăн чухлĕ ытларах та татăклăнрах пулĕç.

Совет çĕршывĕн пур граждăнĕсене валли те,—пирĕн граждăнсенчен кирек хăшне валли те!—пирĕн суйлав блокĕнче вырăн пур. Пирĕн блок вуншар мĕлйун совет граждăнĕсен союзĕ çинче никĕсленсе тăрать, анчах епĕр пĕлетпĕр, çав блокăн вăйне унăн кашни хутшăнаканĕ, кашни уйрăм суйлавçă декаберĕн 12-мĕшĕнче хăй суйлава хутшăннипе ÿстерет. (Алă çупаççĕ).

Ку суйлава совет влаçĕн ташманĕсем те хутшăнаççĕ. Епĕр пурне те тивĕç, пĕр тан, тÿрĕ тата вăрттăн сасăласа суйлассине нимĕн хĕсмесĕр пурнăçа кертетпĕр. Аслă Совета суйланă чухнехи пирĕн задача çакăнта пулать: çав господасене пĕччен, пĕтĕм совет халăхĕнчен мĕскĕн уйрăмлăха тăратса хăвармала. (Алă çупаççĕ).

Аслă Совет суйлавĕ пирĕн Сталинла Конституци ĕçе кĕнине, вăл халăха совет влаçĕ тавра, большевиксен парти тавра, Сталин йулташ тавра тата çирĕпрех петеçтермели хăватлă оруди пулса тăнине, пирĕн çĕршывра социалисăм строителĕсем çĕнĕ аслă çĕнтерÿвсем патне утнине пĕлтерет. (Алă çупаççĕ).

Епĕр Аслă Совет суйлавне стахановла рекордсемпе ответлетпĕр. Епĕр çав рекордсене хушса пырăпăр тата çав çитенÿвсене кунран-кун сăнаса, тĕпчесе вĕренсе тата сарса пырăпăр. Епĕр стахановла кунăн анаçăвĕсене вăрăм вăхăта пыракан анаçусем, пĕтĕм цехсен, пĕтĕм заводсен анаçăвĕсем туса хурăпăр. (Алă çупаççĕ).

Епĕр çав суйлавсене 1937 çулта питте паха тырпул туса илнипе ответлетпĕр. Пирĕн çĕршыв каçалхи чухлĕ тырпула вихăçан та пухса курман, тырпул тухăçлăхĕ çичĕ мĕлйарт пăта çитет. (Алă çупаççĕ).

Йалхуçалăхĕнче, унăн мĕн пур отраçлисенче тата Совет Союзĕн мĕн пур крайĕсенче çав анаçусем çинче çеç чарăнса тăмăпăр, вĕсене малалла ÿстерсе пырăпăр, тесе шанатпăр.

Епĕр Аслă Совет суйлавне культурă çитĕнĕвĕсене хушса нумайлатнипе ответлетпĕр. Çынсен ăстăнĕнче капиталисăм йулашкисене пĕтерес тесен, пирĕн культурăн мĕн пур нацилĕ формисенче тата мĕн пур чĕлхисенче социалисăмлă ăшчиккишĕн хытă ĕçлессине сарса йамала. (Тăвăллăн алă çупаççĕ). Совет интеллигенцин вайĕсем тата хăвăртрах ÿссе пыччăр. Совет çĕршывĕнчи халăхсен талантлă çыннисене сарлакарах çул парар

Аслă Совета пĕркилĕшÿлĕн суйлани, декаберĕн вуниккĕмĕшĕнчи суйлавсенче мĕн пур 90 мĕлйун суйлавçă хутшăнни Совет Союзĕн хăватне питĕ хытă тĕреклетĕç, совет влаçне тата çÿлерех çĕклĕç, мĕн пур çĕршывсенчи ĕççыннисен куçĕ умĕнче Ленин—Сталинăн аслă йалавне мухтава кăларĕç. (Тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ).

Пирĕн Аслă Совет суйлавне çапла ирттермеле: Кремль çинчи çăлтăрсен хĕрлĕ çутти ССР Союзĕнчи ĕççыннисемшĕн тата мĕн пур çĕршывсенчи ĕççыннисемшĕн тата çутăрах çуталчăр, пирĕн парти тата Сталин йулташ çав суйлавсем çинчен пĕр сăмах „лайăх", тесе калаччăр. (Тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ, вăл овацине куçать. Пурте ура çине тăраççĕ, Ленинла - Сталинла Тĕпкома—урра!„. „Халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа—урра!. „Сывă пултăр Аслă Совета депутата суйламалли кандидат Молотов йулташ—урра!". „Суйлавсенче коммуниссемпе партире тăманнисем тунă блокшăн! Пур те суйлава, йулташсем, урра!"—тесе кăшкăраççĕ).

# Епĕ сасăлатăп

(Суйлавçă çырувĕ).

Декаберĕн 12-мĕшĕ—етемлĕх историнче пулман чаплă кун. ССР Союзĕнчи нумай мĕлйунлă ĕççыннисен саванăçлă уйавĕ. Çак кун социалисăмла çĕршыван Аслă Советне суйлатпăр.

Тăратап епĕ ирех, 5 сехетре. Çăванатăп, уйав тумĕпе тумланатăп. Епĕ камне пĕлтерекен документа—паспорта илетĕп те, хамăр участкăри суйлав çуртне кайатăп. Пирĕн суйлав участкин çурчĕ те праçник тумĕпе тумланнă. Çуртăн тăррине пысăк хĕрлĕ йалав вĕлкĕшет, унăн икĕ айккинче ларгса тухнă пĕчĕк хĕрлĕ йалавсем лапкă çил вĕрнипе пĕр йеннелле вĕлкĕшеççĕ.

Суйлав çурчĕн тул йенчи стенасене хĕрлĕ хăмачсем çине çырнă лозунгсемпе тĕрлĕрен плакатсем çакса илемлетнĕ. Çурт ăшĕнчи лампăсен çутти чÿрече витĕр тухса ирхи кавак тĕттĕме çĕнтерсе епĕ пырас çула çутатса тăрать. Суйлав çурчĕн алăкĕ çинче чĕререн йуратакан ывăлне амăшĕ кетсе илнĕ пек:

— Суйлавçă сире савса кĕтетпĕр,—тесе çырнă. Çуртăн тул йенĕ сана ырă кăмăлпа кĕтсе илет. Сана, çĕршывăн хисеплĕ çынне, саламлать. Суйлав çурчĕ таса та çутă. Уйрăм пÿлĕмре хĕрлĕ кĕтес. Кунта çулпуçсен санĕсемпе тĕрлĕрен лозунгсем, Сталинла Конституци тата ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положени. Кунтах суйлавçăн мĕнле йеркепе сасăламалине кăтартакан картинăсене çакнă. Сĕтел çинче патефон илемлĕ çĕнтерÿ йуррисене йанратса кăна ларать. Кунтах тĕрлĕрен хаçат-журналсем, шашкăпа шахмат, биллиард. Тепĕр пÿлĕмĕнче апатланмали буфет. Ачалă суйлавçăсен ачисене пахма уйрăм пÿлĕм. Кашни пÿлĕмĕн алăкĕ çинче ку пÿлĕмре мĕн тумалине пĕлтерекен вывескăсем çакнă.

Акă суйлав комиççин секретарĕ суйлавçăсене курăнмали вырăна ларнă. Унран инçе те мар суйлавçăсем ăнланса илеймен ыйтусене ăнлантарса паракансем лараççĕ.

Участкăри суйлав çуртне кĕретĕп. Тÿрех суйлав комиççи секретарĕ патне пыратăп та, хамăн паспорта кăтартатăп. Вăл суйлавçăсен списки çинче манăн хушамата шырса тупать те, манăн хушамат тĕлне паллă туса, виçĕ бÿллетен тата тепĕр конверт парать. Секретар патĕнчен уйăрăлса уйрăм хупнă пÿлĕме—суйлав пÿлĕмне кĕретĕп. Вăл пÿлĕмре пĕр пукан, тепĕр сĕтел, ручкăпа черния тата çутă лампă. Мана виçĕ тĕслĕ бÿллетен параççĕ Пĕри шурă, тепри кăвак, виççĕмĕш çут симĕс. Вăл бÿллетенсем çине ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă кандидатсен хушамачĕпе йачĕсене çырнă. ШУРĂ бÿллетенĕ çине Союз Советне депутата суйлама палăртнă кандидатăн хушаматне—ЗОЙА АНАНЙЕВНА АНДРЕЙЕВА йулташа çырнă. КĂВАК бÿллетенĕ çине Националçнăçсен Советне РСФС Республикĕнчен Горький суйлав округĕ тăрăх суйламали кандидатăн хушаматне—ВАЛЕРИЙ ПАВЛОВИЧ ЧКАЛОВ йулташа çырнă. ÇУТ-СИМĔС бÿллетен çине Чăваш республикĕнчен Националçнăçсен Советне суйлама палăртнă кандидатăн хушаматне—АЛЕКСЕЙ ИВАНОВИЧ СТЕЦКИЙ йулташа çырнă.

Вĕсене епĕ лайăх пĕлетĕп. Вĕсем Ленин—Сталин партин, пирĕн социалисăмла çĕршывăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсем. Вĕсем ĕççыннисен телейĕ те саванăçлă пуйан пурнăçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ. Епĕ вĕсемшĕн сасăлатăп.

Епĕ бÿллетенсене тирпейлĕ хуçлатса конверт ăшне хуратăп. Конвертне çыпăçтаратăп, вара суйлав комиççийĕ ларакан пÿлĕме кайса, бÿллетенсене урнăна (йешчĕке) йаратăп та, совет гражданинĕн мухтавлă тивĕçне пурнăçлатăп.

Сывă пултăр Аслă Совет! Сывă пулччăр епĕ сасăлакан кандидатсем—Зойа Ананйевна Андрейева, Валерий Павлович Чкалов тата Алексей Иванович Стецкий йулташсем!

Н. Зубровский.

# А. И. Стецкий йулташ Тутаркас районĕнче

МĂН СĔНТĔР (телефон тăрăх) Декаберĕн 9-мĕшĕнче ирхине 8 сехет тĕлне районри суйлавçăсем Мăн Сĕнтере пухăнма пуçларĕç. 60—70 çулхи старикcемпе карчăксем пысăк уйав чухнехи пек савăнса пухăнаççĕ. 8 сехет çитнĕ çĕре 5000 суйлавçă ытла пухăнчĕç.

Митинг уçăлчĕ. Трибунă çине А. И. Стецкий йулташ улăхсанах кашни суйлавçă хыттăн ал çупнипе саламлама тытăнчĕ.

Митингра тухса калакан колхозниксем пурте хăйсем А. И. Стецкийшĕн В. П. Чкаловшăн, З. А. Андрейевашăн сасăлама пулни çинчен пĕлтереççĕ.

А. И. Стецкий йулташ хăйĕн сăмахне чăвашла: Сире колхозниксене большевикла сывлăм! тенипе пуçарчĕ. Малала вăл хăйĕн çине пысăк шанчăк хунăшăн пысăк тав тăвать. Унтан хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа парса хăйĕн сăмахне чăвашла: Сывă пултăр Чăваш халăхĕ! Сывă пултăр Совет Союзĕ! Сывă пултăр Сталин йулташ! тенипе пĕтерчĕ. Митинга пухăннă суйлавçăсем Стецкий йулташ сăмахне тăвăллăн алă çупнипе саламларĕç.

* * *

Каçхине А. И. Стецкий йулташ Шомик суйлав участкинчи суйлавçăсем патĕнче пулчĕ. „Колос" колхозăн çĕнĕ, икĕ хутлă клубне пухăннă 400 суйлавçă Стецкий йулташ сăмахне пысăк кăмăлпа итлерĕç.

Пухува пынă суйлавçăсем Стецкий йулташран çапла ыйтрĕç: Епĕр колхозниксем сирĕнтен пирĕн йатпа Сталин йулташа чĕререн хĕрÿлĕ салам калама ыйтатпăр.

А. И. Стецкий йулташ колхозниксен ыйтăвне хирĕç: калатăп, тесе ответлесен колхозниксем савăнăçпа хыпăнса ÿкнипе тăвăлăн алă çупма тытăнчĕç.

## ХРОНИКĂ

** Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Лубовь Федоровна Стайнова йулташа—Шупашкарти „Чăваш тĕрри" промысла-кооператив ертелĕ членĕсенчен—Националçнăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Округ №496 суйлав комиççи председателĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

** Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Александр Илйич Илйина Союз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар округ № 364 суйлав комиççи членĕнчен кăларнă.

** Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет президиумĕ Леонид Алексейевич Алексейева Союз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Канаш Округ № 365 суйлав комиççи членĕнчен кăларнă.

# Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри сăтăрçăсем совет сучĕ умĕнче

Декаберĕн 9-мĕшĕнче суд следстви ĕçне пĕтерсе каçхи ларура государствă обвинителĕпе защитниксен сăмахĕсене итлерĕ.

Государствă обвинителĕ—Чăваш АССР прокурорĕ Елифанов йулташ суд следствийĕ малтанхи следствине пĕтĕмпех çирĕплетнине кăтартса пачĕ.—Вăл çеç те мар,—тет Елифанов йулташ,—айăпланакансен сăтăрла ĕçĕсем çинчен малтанхи следствире пулман çĕнĕ фактсем те нумай паларчĕç судра.

Малала государствă обвинителĕ сăтăрçăсем хăйсен сăтăрла ĕçĕсене йепле майпа туса пынине кăтартса парать. Паллах, сăтăрçăсем хăйсен сăтăрла ĕçĕсене уççăн туса пыман. Вĕсем сăтăрла ĕçсене тăрă шыв çине кăларма йавăр пултăр тесе, сăтăрла ĕççене йаланах туса пыман. Çавăн пек ĕçлени вĕсене совет обчăлăхĕ йенчен сыхăлăха вăйсăрлатма кирлĕ пулнă, çавăнпа та вĕсем икĕпитленсе ĕçлесе пурăннă.

Çакăн хыççăн Елифанов йулташ сăтăрçăсен ушкăнĕнче кам-кам тăнине пĕререн илсе кăтартать. Сăтăрçăсен идейлă руководителĕ Спиридонов 1917 çулта ес-ерсен органĕнче—„Хыпар" хаçатра ĕçленĕ Буржуалă националиссене тата ытти тĕрлĕ контрреволюцилĕ ушкăнсене пĕрлештерсе тăракан сйессенче пулнă. 1918 çулта сулахай ес-ерсен аллинче тăна „Канаш" хаçатра ĕçленĕ. Йулашкинчен вара Колчак çарĕнче пулса хăй пленалекиччĕнех Хĕрлĕ çара хирĕç çапăçать. Кайарахран тĕрлĕ ултавлă майсемпе парти ретне кĕрет. 1929—1935 çулсем хушшинче троцкиссемпе çыхăну тытса ĕçлесе пурăнать.

Тепĕр сăтăрçă — Михопаркин, офицер пулнăсер, торговец çемйинчен тухнăскер. 1923 çулта ветеринари институтне вĕренме кĕнĕ вăхăтра та хăйĕн монархисла шухăшне пăрахман.

Шулов торговец, лесопромышленник ывăлĕ, патша çарĕн прапорщикĕ пулнăскер. Айăпланакансенчен ыттисем те çавăн пек çынсемех.

Малала государствă обвинителĕ сăтăрçăсен ушкăнĕ хăй умне мĕнле тĕллев лартса ĕçленине кăтартать. Чăваш республикинче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сийен кÿрес шутпа сăтăрçăсен çакан пек задачă пулнă: 1) метизаци ĕçне вăрăма йарса тата паха ăратлă аçа выльăхсемпе выранти выльăхсене искусственнăй майпа чуптарас ĕçе пĕчĕклетсе, выранти выльăх ăратне лайăхлатас ĕçе пăтратса йарасси; 2) выльăх апатне хатĕрлес ĕçе пăтратса йарса выльăх хисепне чакарасси; 3) çавăн пекех тата ветеринари йенĕпе тĕрлĕрен сиçекен чирсем сарса выльăхсен хисепне чакарса, вĕсен продуктивлăхне сахаллатасси; 4) вĕтĕ выльăх-чĕрлĕх (кроликсем, чах-чĕп, хур-кăвакал) ĕрчетес ĕçе пĕтерсе лартасси.

Çаксем йенĕпе ĕçлесе пырса сăтăрçăсем нумай сийен кÿнĕ.

Сăтăрçăсен кашни ĕç результачĕсем мĕнле сийен кÿнине кăтартса парса, кашни сăтăрçăн мĕнле айăпсем пулни çинче чарăнса тăнă хыççăн, государствă обвинителĕ Спиридонова, Михопаркина тата Шулова персе пăрахмала тума приговор йышăнма ыйтать. Айăпланакансенчен ыттисене—Павловпа Орлова 25 шер çул, Суриковпа Семйагина 20-шер çул, Зайкова 5 çул хушши хупса усрамала тума йышăнма ыйтрĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

# Совет Союз Геройĕ полковник В. П. Чкалов Вăрнар районĕнче

ВĂРНАР, 9.XI. (Хамăр корр.). Пайан, декаберĕн 9-мĕшĕнче, Совет Союз Геройĕ полковник Валерий Павлович Чкалов Вăрнар районĕнче пулчĕ. Рабочисем, колхозниксем, ĕççыннисем—суйлавçăсем чаплă хăнана, Националçнăçсен Советне депутата суйламалли кандидата ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç.

Пайан Нурăсра пасар кунĕ. Нурăс йалĕн урамĕ енче, площадре—тулли халăх. Халăх хушшинче машинăсем пырса чарăнчĕç. В. П. Чкалов йулташ машинăран тухсанах ăна палласа илчĕç, саламласа урра кăшкăрчĕç. Пасар площадĕнчех митинг пулчĕ. В. П. Чкалов йулташ митинга сăмах тухса каласа, суйлавçăсене унăн кандидатурине тăратнăшăн тав турĕ; малашне те халăх шанчăкне тивĕçлĕ ĕçлесе пыма сăмах паратăп, терĕ.

Ĕçхалăхĕ хушшинчен ÿссе тухнă паттăрсене, сталинла соколсене пирĕн халăх вĕçĕмсĕр йуратать.

Митингра пулнисем кашни В. П. Чкалов йулташпа сăмах хушасшăн. Унпа йунашар тăракан мучи-колхозник саваннипе нимех те калаймарĕ те:

— Чкалов йулташ, кăтарт-ха орденусене, киле çитсен ачасене те каласа парам,—терĕ. В. П. Чкалов йулташ старикпе ăшшăн калаçса, пальтоне уçса орденĕсене кăтартрĕ.

— Мухтав сире, паттăрăм-ывăлăм!—терĕ старик.

Пасартан таврăнакансен пурин те пĕр сăмах йумах:—Пайан епĕр Чкалов йулташа куртăмăр, унăн сăмахне илтрĕмĕр!

* * *

В. П. Чкалов йулташа тĕл пулса илме Кольцовка урамне йалти пĕтĕм халăх—ватти вĕттипех тухнă. Таврари йалсенчен те, Йĕпреç районĕнчен те нумай пынă. В. П. Чкалов йулташ çитсен урамра, унтан клубра митингсем пулчĕç. Митинга Кольцовкăра Сталин йачĕпе тăракан колхозри ватă колхозник Иерошин йулташ, Йĕпреç районĕнчи „Çиçĕм" колхозран Николайев йулташ сăмах тухса каларĕç. Вĕсем пĕтĕм колхозниксен, колхозницăсен, ĕçхресченесен кăмăлне палăртса, В. П. Чкалов йулташа хĕрÿлĕн саламларĕç, колхозри телейлĕ пурнăç çинчен каласа пачĕç.

— Ĕлĕк епĕр, Кольцовкăри чухăнсем,—терĕ Йерошин йулташ,—выçă пурăннă. Пире выçă усранă патша саманине ылханса аса илетпĕр. Аслă çулпуç Сталин йертсе пынипе колхоза пĕрлешрĕмĕр. Пĕрле ĕçлесе пуйан, культурлă пурнăç турăмăр. Кăçал епĕ 800 пăт таса тыра илтĕм. Мухтав тăван çĕршыва! Мухтав аслă Сталина!

— Йулташсем-суйлавçăсем!—тет Йерошин йулташ Пирĕн пурнăç çав тери çĕнелчĕ. Ĕлĕк епĕ патша çарĕнче салтак пулнă. Унчухне салтака çын вырăнне хумасчĕç. А пирĕн геройсем, халăх ывăлĕсем—халăхпа пĕрле. ВАЛЕРИЙ ПАВЛОВИЧ ЧКАЛОВ тĕнчипе паллă çын. Акă, хаçь вăл пирĕнпе пĕрле. Ленин—Сталин парти те çавах,—вăл нихăçан та халăхран уйăрăлса тăмасть. Çавăнпа пирĕн совет халăхне нимĕнле тăшмансем те нихăçан та çĕнтереймĕç!

Митингра В. П. Чкавов йулташ сăмах тухса каларĕ. Вăл суйлавçăсене хăйĕн пурнăçĕпе вĕçевĕсем çинчен, Совет çĕршывĕн хăватлă авиацийĕ çинчен каласа пачĕ.

— Кăçалхи çул епĕр, — терĕ вăл йулашкинчен, — Мускавран Çурçĕр Америкăна Çурçĕр Полюсĕ урлă вĕçсе, етемлĕхĕн ĕмĕрхи ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕмĕр. Епĕр Америкăна вĕçсе çитсен пĕтĕм Америкă, пĕтĕм тĕнче тĕлĕнчĕ. Мĕншĕн тесен, халиччен çав çулпа вĕçме çук, тесе шутланă. Пирĕн вĕçев Совет авиацийĕ çав тери хăватлине кăтартса пачĕ. Капиталисăмла çĕршывсем, уйрăмах фашисла çĕршывсем, пирĕн социалисăмла çĕршыва тарăхса пурăнаççĕ, тапăнма сăлтав шыраççĕ. Анчах тăшмансем пĕлсе тăччăр: совет халăхĕн ывăлсем—пирĕн летчиксем, кирлĕ чухне, совет самолетĕсемпе тĕнчери кирек хăш государствăн столици тĕлне те вĕçсе çитме пултараççĕ. Сталин йулташ тăрăшнипе пирĕн авиаци тĕнчери чи хăватлă авиаци пулса тăчĕ.

— Правителствă пире, сталинла маршрутсемпе вĕçнисене пысăк нагрудăсем пачĕ. Çакă вăл пире тата вайлăрах ĕçлесе пыма хушать. Тăван çĕршывăн мухтавлăхне, унăн чысне çÿлерех те çÿлерех çĕклентерсе пыма пĕтĕм пĕлÿпе вăйа хурса ĕçлеме пулатăп!

Митинга пухăннă суйлавçăсем В. П. Чкалов йулташăн сăмахĕсене хапăл турĕç, пур суйлавçăсене те декаберĕн 12-мĕшĕнче сасăсене çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемшĕн—суйлав округĕсенче палăртнă кандидатсемшĕн пама чĕнсе резолюци йышăнчĕç.

* * *

Каçхине Вăрнар посолкинчи тата таврари йалсенчи суйлавçăсем В. П. Чкалов йулташпа тĕл пулчĕç. Кунта та чаплă митинг пулса иртрĕ. Митингра каланă сăмахĕнче В. П Чкалов йулташ Националçнăçсен Советне депутата суйлама хăйĕн кандидатурине палăртнăшĕн тав турĕ, халăх шанчăкне тивĕçлĕ ĕçлесе пыма пулчĕ.

Вăрнарти митинг хыççăн В. П. Чкалов йулташ пойеспа Горький хулине кайрĕ. Чаплă хăнана ăсатма станцине пит нумай халăх пынă.

Чăваш республикинчи Сывлăха сыхлав халăх комиссариачен дезинфекци тăвакан тĕп станцийĕ учрежденисемпе, предприйатисемпе, заведенисемпе тата ытти организацисемпе

ПУРИНПЕ ТЕ

1937 çулхи декаберĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 31-мĕшне çитиччен 1938 çулта профилактикăлă санобработкă, дезинфекци тума тата хлор сапма

**договор тăвать**

Адрес: Ново-Поперечная урамĕ (Киров шкулĕпе йунашар). Çак срук иртсен договор туман организацисенче санобработкă тата дезинфекци тума йышăнмасть.

Дирекци.

3—3

Атăлăн сулахай йенче кĕтÿре çÿренĕ вăхăтра

**ИКĔ ЛАША ÇУХАЛНĂ**

Пĕри—кăвак, „Абрик" йатлă, çÿлĕш 153 сантиметр. Тепри—çÿрен, „Копчик" йатлă, çÿлĕш 134 сантиметр.

Çак адрĕспе пĕлтермеле: Шăмăш йалсовечĕ, Шупашкар районĕ, „Память Ленина" колхоз правленине.

„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т.,3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 944. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13790. 58—92 см. 1—1 п. л.